Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1938 МАЙ 21 ШАМАТКУН
114 (4927) №

ЧӐВАШ КОММУНӖ

21-мӗш ҫул тухать — ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Тӗпӗҫтӑвкомӑн хаҫачӗ — Пӗр №-рӗ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСӖ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторӑн 0—67; Ред. заместителӗн 0—88; Редакци секретарӗн 4—40; Дежурнӑйӑн 6—23

Малта пыракан ӑслӑлӑх

Сталин йулташ Кремӗлре аслӑ шкулсен работникӗсене йышӑннӑ чухне майӑн 17-мӗшӗнче каланӑ сӑмахне пичетленӗ май „Правда" хаҫат умстатйиара ҫапла ҫырать:

„Ҫак чаплӑран та чаплӑ сӑмаха пирӗн ҫӗршыври ӗҫҫыннисем—рабочисем, колхозниксем, интеллигентсем пысӑк хавхаланупа та хавхаланупа вуласа тухаҫҫӗ. Ӑна пирӗн ҫӗршывран инҫетри ӗҫҫыннисен мӗлйунӗсем те хумханупа та хаваслӑхпа вуласа тухаҫҫӗ. Капиталисӑмлӑ ҫӗршывсенчи тӳрӗ кӑмӑллӑ интеллигентсем, Сталин йулташӑн сӑмахне вуласа тухса, тарӑн шухӑша кайаҫҫӗ.

Сталин йулташ аслӑ шкул работникӗсен йачӗпе каланӑ сӑмах ӗҫлевпе ӑслӑлӑхӑн пур ҫыннисем ҫине, ватӑ тата ҫамрӑк учонайсем ҫине, стахановӗцсем, студентсем, мӗн пур ҫамрӑксем ҫине пӑхса каланийӗх пулса тӑрать. Сталин йулташӑн хавхалантаракан сӑмахӗсене йепле хаваслӑхпа вулаҫҫӗ-ши советӑн вӗренекен ҫамрӑкӗсем, испытанисене хатӗрленекен ҫамрӑксем. Ҫакӑ вӑл—вӗсемшӗн ҫула тухса кайас умӗнхи чи лайӑх сӑмах пулса тӑрать. Ҫамрӑксем умӗнче вӗҫӗ-хӗррисӗр анлӑ талкӑшсем. Ҫав тери телейлӗске пурӑнма, вӗренме ӗҫлеме ӑслӑлӑх ваљљи, пуҫарулӑх ваљљи, творчӗствӑ ваљљи, хайулӑхпа паттӑрла ӗҫсем ваљљи ҫавӑн пек майсем туса паракан ҫӗршывра!

Халӑхшӑн хӑй ирӗкӗпе ӗҫлекен ӑслӑлӑх кӑна хисеплӗ йат илтме пултарать. Сталин йулташ ҫапла каланӑ:

„Ӑслӑлӑх чечекленсе пырассишӗн,—халӑхран уйӑрӑлса тӑман, хӑйне халӑхран инҫетре тытман, халӑхшӑн ӗҫлеме хатӗр тӑракан, ӑслӑлӑх кӗрешсе илнисене пӗтӗмпех халӑха пама хатӗр тӑракан, ирӗксӗр мар, ирӗккӗн хавассӑн халӑхшӑн ӗҫлекен ӑслӑлӑх чечекленсе пырассишӗн. (Алӑ ҫупаҫҫӗ)".

Ҫакӑн пек ӑслӑлӑх совет ҫӗршывӗнче кӑна, социалисӑм ҫӗнтернӗ ҫӗршывра, чӑн-чӑн демократи ҫӗршывӗнче кӑна пулма пултарать. Пур капиталисӑмлӑ ҫӗршывсенче те ӑслӑлӑх капиталиссемпе помещиксемшӗн ӗҫлесе пырать. Вӑл халӑхран хӑрать тата халӑх ҫине ҫӳлтен айалала пӑхать. Вӑл пуҫпулса тӑракан классене кӑна пелӳ парассине сыхласа тӑрать.

Анчах капиталисӑм ӑслӑлӑха ирӗккӗн пурӑнмала туса пама пултараймасть. Учонайсене ӗҫсӗр тӑрса йулас хӑрушлӑх хӑратса тӑрать. Университетсемпе институтсем мӗскӗн те начар пурнӑҫпа пурӑнаҫҫӗ. Хӑйӗн ӗҫ укҫишӗн учонай капиталисла хуҫасем умӗнче чӗтресе тӑрать. Вӑл ҫамрӑксем хушшинчен тухнӑ ӑслӑлӑх ҫыннисенчен хӑраса тӑрать, хӑйӗн шухӑшӗсене ыттисене каласа парассинчен хӑраса хупаљча ӑшне хупӑнса ларать.

Совет ҫӗршывӗнче кӑна, влаҫа халӑх тытса тӑракан ҫӗршывра кӑна, социалисӑмлӑ економикӑпа куљтурӑна пӗр чарусӑр ӳсме май туса панӑ ҫӗршывра кӑна ҫакӑн пек ӑслӑслӑх.

„Ӑслӑлӑхӑн пур алӑкӗсене те хамӑр ҫӗршывӑн ҫамрӑк вӑйӗсене ваљљи ирӗккӗн те хавассӑн уҫса паракан тата вӗсене ӑслӑлӑхӑн ҫӳллӗшӗсене кӗрешсе илме май паракан, малашлӑх ӑслӑлӑхри ҫамрӑксенӗн пулассине йышӑнакан ӑслӑлӑх" (Алӑ ҫупаҫҫӗ) пулма пултарать".

Совет ҫӗршывӗнче кӑна, социалисӑм ҫӗнтернӗ ҫӗршывра кӑна чӑн-чӑн ӑслӑлӑх, тунӑ ҫитӗнӳсем ҫинче чарӑнса ларман, пӗрмайах малала кайса пыракан ӑслӑлӑх пулма пултарать. „Ӑслӑлӑха ҫавӑншӑн ӑслӑлӑх теҫҫӗ те, вӑл кивелсе пӗтсе пыраканни ҫине алӑ ҫӗклеме хӑрамасть, вӑл опыт, практикӑ каласисене ҫивӗччӗн итлесе пырать". (Сталин). Ҫакӑн пек ӑслӑлӑх вӑл ӑслӑлӑха аталанса пыма пулӑшакан традицисене, ирӗксӗр те шиксӗр сӑнаса вӗренессин традицисене, хаклама пӗлет. Анчах кивӗ традицисене нормӑсене, установкӑсене, вӗсем кивелсе кайсан, вӗсем малала кайма чарса тӑраканнисем пулса кайсан, ҫӗмӗрме пултаракан тата ҫӗнӗ традицисем, ҫӗнӗ нормӑсем, ҫӗнӗ установкӑсем туса пыма пултаракан ӑслӑлӑх кӑна чӑн-чӑн ӑслӑлӑх пулма пултарать.

Сталин йулташ хӑйӗн сӑмахӗнче пирӗн вӑхӑтри асларан та аслӑ учоннӑй ҫинчен, асларан та аслӑ револљуционер ҫинчен—Ленин ҫинчен каланӑ. Ытти пур ӑслӑлӑх ҫыннисем пекех, ӑслӑлӑхшӑн кӗрешекеннисем пекех, Ленин киввишӗн тӑраканнисене хирӗҫ тӑма хӑраман. Ӑслӑлӑхӑн нумай ҫыннисем, Ленин ӑслӑлӑхлӑ анализ туса, Российа 1917 ҫулта пулнӑ лару-тӑруран тухмали пӗртен-пӗр май—Российара социалисӑм ҫӗнтерни пулать,—тесе ҫирӗплетнӗ вывӑда „аташни" тесе шутланӑ.

„Ун чухне Ленина хирӗҫ, ӑна ӑслӑлӑха ҫӗмӗрекен ҫын выранне хурса, ӑслӑлӑхӑн ҫыннисем пур те, пур тӗрлисем те уланӑ. Анчах Ленин йухӑма хирӗҫ, киввишӗн тӑракансене хирӗҫ кайма хӑраман. Вара Ленин ҫӗнтернӗ". (Алӑ ҫупаҫҫӗ).

Ленин ӗҫсене малала туса пыракан Сталин йулташ, марксисла-ленинла ӑслӑлӑхлӑ анализ туни тӑрӑх хамӑр ҫӗршывра социалисӑм строителствин аслӑ программине тунӑ вӑхӑтра, нумай мӗлйунлӑ совет халӑхне социалисӑмшӑн ҫӗнтерӳлӗ кӗрешӗве илсе пынӑ вӑхӑтра „ӑслӑлӑхӑн" ҫыннисем пурте, пур тӗрлисем те ҫавӑн пекех уланӑ.

Пирӗн ҫӗршыври ватӑ тата ҫамрӑк учоннайсем умӗнче, мӗн пур ӗҫҫыннисем умӗнче, мӗн пур совет ҫамрӑкӗсем умӗнче ӑслӑлӑхӑн аслӑ ҫыннисен, ӑслӑлӑхшӑн пӗр шиксӗр кӗрешекенсен, болљшевисӑма тӑвакансен—Ленинпа Сталин сӑнсӑпачӗсем тӑраҫҫӗ.

Болљшевиксен партийӗ совет ҫыннисем хушшинче ҫавӑн пек нимӗнрен хӑраман пахалӑхӗсене вӗрентсе ӳстерет. Вӑл пуҫарулӑх тума вӗрентет, пӗрмайах ҫӗнӗ ҫулсем шырама вӗрентет. Стахановла йухӑм вӑл—пирӗн парти рабочи класа, колхозниксене, ӗҫлӗх интеллигенцине ӑслӑлӑхпа техникӑра ҫӗнӗ ҫулсем хывма, техникӑна вӗренме, ҫӗнӗ кадрсем, болљшевикла хавхаланупа ӗҫлекен кадрсем тума чӗннине хирӗҫ историлӗ ответ пулса тӑрать.

Стахановпа Папанин—вӗсем ӑслӑлӑхпа техникӑ умӗнче ҫӗнӗ ҫулсем уҫакан ҫынсем пулса тӑраҫҫӗ. Вӗсем учоннайсем мар. Вӗсем—хӑйсен ӗҫне практикӑра туса пыракансем ҫеҫ. Анчах Стаханов тата стахановӗцсем промышлӗннӑҫра ӑслӑлӑхпа техникӑн паллӑ ҫыннисем тунӑ нормӑсене ӳпӗнтерсе йанӑ. Вӗсем ӑслӑлӑхпа техникӑна килӗшекен ҫӗнӗ нормӑсем хушса панӑ.

Папанинпа папанинцӑсем Арктикӑ ҫине кивӗле пӑхас йалана ӳпӗнтерсе йарса, ӑслӑлӑха тивӗҫлӗ йала туса хунӑ. Стахановпа Папанин йулташсем—практиксем чӑн-чӑнах ӑслӑлӑхӑн-новатӑрӗсем пулса тӑраҫҫӗ.

Учонайӑн дипломӗ ҫук пулсан та, анчах хайулӑх пур пулсан, ӑслӑлӑхра пуҫарулӑх пур пулсан, кивӗ традицисене хирӗҫ кӗрешнӗ ҫӗрте шиксӗр пулсан, пирӗн тӑван ҫӗршыва вӗҫӗмсӗр йуратса тӑракан ывӑлсем пулсан, социалисӑм строителствинче хайулӑхпа паттӑрлӑха кӑтартса ӗҫлесен, пурӗ пӗрех ӑслӑлӑх ваљљи чӑн-чӑн ҫул хывакан пулма пулать.

Ҫав вӑхӑтрах, темӗн тӗрлӗ вӗреннӗ ҫын йачӗ пулсан та, консервативлӑ, чунсӑр традицисен чури ӑслӑлӑхри чиновник, йутҫӗршыв авторитечӗсен тарҫи (йутҫӗршыв авторитечӗсем хӑйсем йенчен тата—капитал тарҫисем) пулса йулма пулать. Ҫакнашкал суйа учонайсем совет ҫӗршывӗнче ӑслӑлӑх аталанӑвне чӑрмантарса тӑраҫҫӗ. Вӗсем ҫамрӑксенчен йутшӑнаҫҫӗ. Вӗсем, практикӑлӑ ӗҫрен хӑраса, социалисӑм строителствин вӗресе тӑракан пурнӑҫа пырса тӗкӗнесрен хӑраса хӑйсен учонай „йачен хупаљчипе витӗнеҫҫӗ.

Чӑн-чӑн ӑслӑлӑхшӑн, Совет халӑхӗшӗн кӑна ӗҫлекен ӑслӑлӑхшӑн, традицисемпе кӗрешнӗ ҫӗрте шиксӗр пулса тӑракан ӑслӑлӑхшӑн, пур ҫулсем те уҫӑ. Ватӑ тата ҫамрӑк учонайсем партипе правителствӑ руководителӗсем вӗсем ҫине мӗнле тимлӗхпе пӑхнине туйаҫҫӗ. Сталин йулташ совет ӑслӑлӑхӗ тунӑ пур ҫитӗнӳсене те тимлӗн тата йуратса сӑнаса пырать.

Сталин йулташ сӑмахӗ совет ӑслӑлӑхӗн ватӑ тата ҫамрӑк кадрӗсене татах та пысӑк вӑй парать. Вӑл сӑмах пӗтӗм ҫӗршыв тӑрӑх ҫапла йантраса тӑрӗ: ӑслӑлӑх ҫине тата ытларах ҫавӑрӑнса пӑхмала, унӑн дейателӗсем ҫине тата вӗренекен ҫамрӑксем ҫине хытӑрах пӑхмала. Вӑл сӑмах ӗҫҫыннисене тата та лайӑхрах ӗҫлеме, тата та тимлӗнрех вӗренме, ӑслӑлӑх пулӑшнипе хӑйӗн ӗҫне ҫӳлӗ пусӑма лартма хавхалантарӗ.

Пӗтӗм ҫӗршыв тӑрӑх суйлав умӗнхи пухусем пулса иртеҫҫӗ. Мӗлйуншар совет граждӑнӗсем ҫӗнтерӳлӗ ӗҫӗн итогӗсене тӑваҫҫӗ. Вӗсем социалисӑмӑн ҫитӗнӗвӗсене кураҫҫӗ, партипе правителствӑ руководителӗсене саламланисем пур кӗтессенчен те илтӗнеҫҫӗ. Сталинӑн йачӗ, унӑн чаплӑ соратникӗсен йачӗсем—совет халӑхӗн пӗр май асӑнакан йатсем пулса тӑраҫҫӗ. Сталин йулташӑн аслӑ шкул работникӗсен йачӗпе каланӑ сӑмахӗ вӑл—халӑха хӗрӳлӗн йуратнине тата пирӗн партипе правителствӑ халӑхшӑн тӑрӑшнине кӑтартакан паллӑ пулса тӑрать.

(„Правда" умстатйи, майӑн 19-мӗш).

Канаш сават суйлав округӗ

Канашри вакунсем йусакан саватри рабочисен, инженерла-техникла работниксен тата служащисен суйлав умӗнхи пухӑвӗ РСФСР Верховнӑй Советне депутата суйлама

Иосиф Виссарионович Сталинпа
Йекатеринӑ Антонӑвнӑ Антонӑвӑ

йулташсен кандидатурине тата ЧАССР Верховнӑй Советне депутата суйлама

Лазарь Моисейӗвич Кагановичпа
Константин Тимофейӗвич Назарӑв

кандидатурисене тӑратнӑ

КАНАШ, (апрелӗн 19-мӗшӗ, телефонпа тӑрӑх). Пайан Канашри вакунсем йусакан саватри рабочисен, работницӑсен тата служащисен суйлав умӗнхи пухӑвӗ пулса иртрӗ. Пухӑва сават комитечӗн председателӗ А. П. Петров йулташ уҫрӗ. Чи малтан ПСК(б)П членӗ, сават механикӗн помошникӗ М. А. Љамин йулташ тухса хӗрӳлӗ сӑмах каларӗ.

РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсене суйламали историлӗ кун, ийунӗн 26-мӗшӗ ҫывхарса килет. Ку кун тӗнчери чи демократилӗ Сталинла Конституци тӑрӑх, Ленин—Сталин парти ӗҫӗшӗн, социалисӑм ӗҫӗшӗн хӑйӗн вӑйӗсене пурнӑҫне шеллемесӗр кӗрешме пултаракансене, социалисӑмла ҫӗршывӑн чи лайӑх ҫыннисене, унӑн ҫулӑмлӑ патриочӗсене РСФСР тата ЧАССР Аслӑ органӗсене—Верховнӑй Совечӗсене депутата суйлатпӑр.

Совет халӑхне коммунисӑм патне илсе пыракана, пӗтӗм ӗҫҫыннисене телейлӗ те савӑнӑҫлӑ, пуйан та куљтурӑлӑ пурнӑҫ туса паракана, ӗҫҫыннисен ҫулпуҫне аслӑ Иосиф Виссарионович Сталин йулташа Канаш суйлав округӗ тӑрӑх РСФСР Верховнӑй Советне депутата суйлама кандидата тӑратма сӗнетӗп. (Тӑвӑллӑн ал ҫупаҫҫӗ).

М. А. Љамин йулташ хыҫҫӑн, комсомол комитечӗн ҫекретарӗ И. Дамйанков йулташ Лазарь Моисейӗвич Каганович йулташа Канаш сават суйлав округӗ тӑрӑх ЧАССР Верховнӑй Советне депутата суйлама кандидата тӑратма сӗнет. Тимӗрҫ цехӗнчи слесӑр-стахановӗц, И. Тӳрин йул. Константин Тимофейӗвич Назарӑв йулташа—инженера, тимӗрҫ цехӗн начаљникне, ПСК(б)П членне, Канаш сават суйлав округӗ тӑрӑх ЧАССР Верховнӑй Совет депутатне суйлама кандидата тӑратма сӗнет. Йӑвӑҫ цехӗнчи рабочи-стахановӗц, И. Григорйӗв йулташ Антонӑвӑ Йекатеринӑ Антонӑвнӑ йулташа, саватри паллӑ стахановкӑна, ПСҪЛКС членне, Канаш суйлав округӗ тӑрӑх РСФСР Верховнӑй Советне депутата суйлама кандидата тӑратма сӗнчӗ.

Канашри вакунсем йусакан саватри рабочисен, инженерла-техникла работниксен тата служащисен пӗрлехи пухӑвӗ йышӑннӑ постановлени

Пухура 1800 ҫын пулнӑ.

РСФСР Верховнӑй Советне депутата суйлама кандидатсем тӑратасси ҫинчен сӳтсе йавнӑ хыҫҫӑн, Канашри вакунсем йусакан саватри рабочисен работницӑсен, инженерла-техникла работниксен тата служащисен пӗрлехи пухӑвӗ ҫапла йышӑнать:

1. Канаш суйлав округӗнчен РСФСР Верховнӑй Советне депутата суйлама Ленин ӗҫне малала туса пыракана, тӗнчери чи демократилӗ Конституцине тӑвакан генийӗ, совет халӑхне вӗҫӗ-хӗррисӗр йуратакана, халӑх тӑшманӗсене хирӗҫ пӗр хӗрхенмесӗр кӗрешекене, пире ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем патне илсе пыракан аслӑ та ҫывӑх туса, ҫулпуҫа **Иосиф Виссарионович Сталин** йулташа кандидата тӑратас. Вӑл 1879 ҫулта ҫуралнӑ, ПСК(б)П членӗ, ПСК(б)П Тӗп комитечӗн генераљнӑй ҫекретарӗ, Мускавра Кремӗлре пурӑнать.

Рабочисен, работницӑсен, инженерла-техникла работниксен тата служащисен пӗрлехи пухӑвӗ Сталин йулташран РСФСР Верховнӑй Советне депутата суйлама Канаш суйлав округӗ тӑрӑх баллотировкӑна тӑма килӗшӳ пама ыйтать.

РСФСР Верховнӑй Советне депутата суйлама кандидата саватри чаплӑ стахановкӑна йӑвӑҫ каскалакан цехри станочницӑна,—1917 ҫулта ҫуралнӑ, ПСҪЛКС членӗ, Канаш хулинче пурӑнать,—**Йекатеринӑ Антонӑвнӑ Антонӑвӑна** тӑратас.

Антонӑвӑ йулташран РСФСР Верховнӑй Советне депутата суйланма Канаш суйлав округӗ тӑрӑх баллотировкӑна тӑма килӗшӳ пама ыйтас.

3. Чӑваш АССР Верховнӑй Советне депутата суйлама Канаш сават суйлав округӗ тӑрӑх Канашри вакунсем йусакан саватри рабочисем, работницӑсем тата служащисем аслӑ Сталинӑн ҫывӑх соратникне, социалисӑмла транспӑртпа промышлӗннӑҫ ӳсӗмӗсӗн чаплӑ организатӑрне, совет халӑхӗ чӗререн йуратакан сталинла наркома—**Лазарь Моисейӗвич Каганович** йулташа палӑртаҫҫӗ тата унтан Чӑваш АССР Верховнӑй Советне депутата суйланма, Канаш сават суйлав округӗ тӑрӑх баллотировкӑна тӑма килӗшӳ пама ыйтас.

4. Чӑваш АССР Верховнӑй Советне депутата суйлама кандидата саватри хӗрлӗ йалавлӑ тимӗрҫ цехӗн начаљникне, стахановӗҫа — **Назарӑв Константин Тимофейӗвича** тӑратас. Вӑл 1899 ҫулта ҫуралнӑ, ПСК(б)П членӗ, Канаш хулинче пурӑнать.

Назарӑв йулташран Канаш сават суйлав округӗ тӑрӑх ЧАССР Верховнӑй Советне депутата суйланма баллотировкӑна тӑма килӗшӳ пама ыйтас.

Мускаври Молотӑвски суйлав округӗнчи суйлав умӗнхи канашлу РСФСР Верховнӑй Советне депутата суйлама кандидата Вйачеслав Михайлӑвич Молотӑва палӑртнӑ

Майӑн 19-мӗшӗнче Мускаври Молотӑвски суйлав округӗнчи суйлав умӗнхи канашлу пулса иртнӗ. Вӑл канашлура 140 пин ӗҫҫынни суйланӑ представителсем 2.500 ҫын пулнӑ.

Канашлуна Клара Цеткин йачӗпе тӑракан хапракри партире тӑман работницӑ Крайнева йулташ уҫнӑ.

Малтанхи сӑмах туҫа калама вӑл „Манометр" саватри токӑр — стахановӗца Бочарӑв йулташа сӑмах панӑ. Вӑл хӑйӗн уҫӑмлӑ сӑмахӗнче ҫапла каланӑ:

— Молотӑв йулташӑн пирӗн халӑхшӑн тунӑ тата тивӗҫлӗ ӗҫӗсем питӗ пысӑк. Вӑл РСФСР Верховнӑй Советне депутата суйлама пирӗн кандидат пулма тивӗҫлисенчен чи тивӗҫли. Пире ӑна хамӑр кандидат тесе чи малтан йат пама пысӑк чыс тиврӗ. Халь епӗр Молотӑв йулташран, пирӗ ҫав чыса тивӗҫлӗ тума тата пирӗн суйлав округӗнче баллотировкӑна тӑма хӑйӗн килӗшӳне пама ыйтатпӑр.

Трибунӑ ҫине округри пысӑк предприйатисен тата общӗствӑлӑ организацисен представителӗсем тухаҫҫӗ. Вӗсем Бочарӑв сӗнӳвӗшӗн хӗрӳлӗ тӑраҫҫӗ. Хумханула сӑмахӗсенче вӗсем хӑйсен сасӗсене Ленинӑн Сталинӑн чи ҫывӑх соратникӗшӗн, ҫирӗп болљшевикшӑн, коммунисӑм ӗҫӗшӗн, ӗҫҫыннисен телейӗшӗн хӑйӗн пурнӑҫне шеллемесӗр кӗрешекеншӗн, болљшевикла партин пысӑк организатӑрӗшӗн, государствӑн паллӑ дейателӗшӗн, Совет Правителствин ӗҫре тӗреслӗнне руководителӗшӗн. — Молотӑв йулташшӑн пама тивӗҫлӗ пулнипе хӑйсем пысӑк телейлӗ пулни ҫинчен калаҫҫӗ.

Канашлу пысӑк ҫӗкленӳпе Молотӑв йулташ патне унтан РСФСР Верховнӑй Советне депутата суйланма Молотӑвски суйлав округӗнче баллотировкӑна тӑма килӗшӳ пама ыйтса ҫырнӑ ҫырӑва тата суйлавҫӑсене чӗнсе каланине йышӑннӑ.

Канашлу 236 доверенӑй суйланӑ, вӗсене округри суйлавҫӑсем хушшинче агитацилӗ ӗҫе туса пыма хушнӑ.

Канашлу пысӑк хавхаланупа Сталин йулташ патне саламлӑ ҫыру йама йышӑннӑ.

(ТАСС).

„Н—212" самољотӑн аварийӗ

Майӑн 18-мӗшӗнче Франц-Иосиф ҫӗрӗ ҫинчен таврӑнакан „Н-212" самољот Архангӗлск ҫывӑхӗнчи аеродромран вӗҫсе хӑпарнӑ чухне авари пулнӑ. „Н-212" самољот ҫинче авиаотрйад начаљникӗ **Бабушкин** йулташ, самољот командирӗ **Мошковский** йулташ, пӗрремӗш пилот **Глушченко** йулташ тата ыттисем те — пӗтӗмпе вунултӑ ҫын пулнӑ. Ҫӗр ҫумӗнчен уйӑрӑлса хӑпарсан пӗр моторӗ ӗҫлеме чарӑннӑ, ҫулӑм кунӑннӑ. Пилот самољота ҫӗр ҫине антарса лартма пуҫланӑ. Самољот ҫӗр ҫумне ҫапӑнса тепӗр хут сывлӑша хӑпарса йухӑншыв ҫине кайса ӳкнӗ, унта вӑл темиҫе минутран путнӑ.

Катастрофӑ пулнипе Совет Сойуз Геройӗ М. С. Бабушкин йулташ, инженер И. И. Жутовский йулташ, експедици врачӗ И. М. Росҫељс йулташ тата механик К. А. Гурский й-ш вилнӗ. Йулашкийӗ ҫынӗн ӳчӗсене водолазсем тупайман.

Вӗҫевре пулнӑ ытти ҫынсем аманнӑ. Вӗсене хӑвӑрт медицина пулӑшӑвӗ панӑ. Вӗсен сывлӑхӗ вӑтам.

Авари пулнӑ сӑлтава тӗрӗслеме вырӑна Ҫурҫӗр тинӗс ҫулӗн Тӗп Управленийӗн начаљникӗн заместителӗ Шевелӗв йулташ туса кайнӑ.

ССР Сойузӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ експедицире пулнисен вилнисене государствӑ шучӗпе пытарма тата вӗсен ҫемйисене пысӑк пенҫи пама йышӑннӑ.

Аварипе вилнисене Мускавра пытараҫҫӗ. Пытармали кун ҫинчен уйрӑмӑн пӗлтереҫҫӗ.

(ТАСС).

Николай Михайлӑвич Шверник йулташа

ПСК(б)П Тӗп Комитечӗ ӗҫӗр аллӑ ҫул тултарнӑ кун Сире—Ленин гвардинчи ватӑ болљшевика—хӗрӳ салам йарать.

ПСК(б)П Тӗп Комитечӗ Сире хамӑр партипе Совет Сойузӗнчи ӗҫҫыннисене усӑ кӳмешкӗн нумай ҫулсем хушши пултарулӑн ӗҫлесе пурӑнма сунать.

ПСК(б)П Тӗп Комитечӗ.

Джамбулӑн творчӗствӑла ӗҫӗ 75 ҫул тултарнине уйавлани

Сталинла тапхӑрти чапа тухнӑ йурӑҫӑн, орденоносец Джамбулӑн творчӗствӑла ӗҫӗ 75 ҫул тултарнӑ йубилей йачӗпе Казахстанра уйав кунӗсем пуҫланнӑ. Алма-Атара майӑн 18-мӗшӗнче акынсен республикӑри слӑочӗ уҫӑлнӑ. Илемлӗн ерешленӗ сценӑ ҫинче Джамбул ҫырнӑ сӑвӑсенчен илнӗ сыпӑксем:

„Йурлӑр акынсем, йурӑсем шыв пек йухчӗр!
Йурлӑр Сталинла Конституци ҫинчен".

Чаплӑ ларура Джамбулӑн творчӗствипе халӑх поезийӗ ҫинчен Мухтар Ауезӑв писатӗл доклад туса панӑ. Доклад хыҫҫӑн халӑх акынӗсем пӗрин хыҫҫӑн тепри сценӑ ҫине тухса каланӑ. Вӗсем пӗтӗм халӑх йачӗпе аслӑ Сталина тав тӑваҫҫӗ, вӗсем пирӗн телейлӗ те савӑнӑҫлӑ пурнӑҫ ҫинчен, халӑх поезийӗ чечекленни ҫинчен йурлаҫҫӗ.

Слљотра Украинӑран, Мускавран килнӗ писатӗлсем те пулчӗҫ.

* * *

Йубиљар йачӗпе ҫӗршер саламлӑ телеграммӑсем килсе тӑраҫҫӗ. Вӗсенчен пӗринче, Совет писатӗлӗсен Сойузӗн Правленийӗ Джамбула саламласа йанӑ телеграммӑра ҫапла каланӑ: „Ан тив, халӑх йуратӑвӗпе ӑшӑнса вӑй илнӗ чӗре тата нумай ҫулсем хушши таптӑр; ан тив, Сталинӑн аслӑ генийне, чечекленекен тӑван ҫӗршыва мухтакан йурӑсем тата нумай ҫулсем хушши йанӑраччӗр".

(ТАСС).

Джамбул Джабайӗв йулташа Ленин орденӗпе наградӑласси ҫинчен

ССРС Верховнӑй Совет Президиумӗн Указӗ

Творчӗствӑлӑ ӗҫре ӗҫлеме пуҫлани 75 ҫул тултарнӑ май, Казахстан халӑх йурӑҫине — Джамбул Джабайӗв йулташа Ленин орденӗ парса наградӑлас.

ССРС Верховнӑй Совет Президиумӗн председателӗ
М. Калинин.

ССРС Верховнӑй Совет Президиумӗн ҫекретарӗ—
А. Горкин.

Мускав, Кремӗл,
1938 ҫулхи майӑн 19-мӗшӗ.

Пĕтĕм республика тăрăх пысăк çĕкленӳпе тата хавхаланупа суйлав умĕнхи пухусем пулса иртеççĕ

Тĕрлемес тата Çĕрпӳ суйлав округĕ

Тĕрлемес чукунçул станцинчи, почтăри, тĕштыр хатĕрлев кантурĕнчи тата çăмарта хатĕрлекен базăри рабочисемпе служащисем РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама

Лазарь Моисейĕвич Каганович

йулташ кандидатурине тата Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Александр Иванăвич Пожеданăв

йулташ кандидатурине палăртнă

(Тĕрлемес станцинчи, тĕштыр хатĕрлев кантурĕнчи, почтăри, тата çăмарта хатĕрлекен базăри рабочисемпе служащисен суйлав умĕнхи пухăвĕ йышăннă резолюцирен)

РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама кандидатсем тăратасси çинчен сӳтсе йавнă хыççăн, пĕрлехи пуху çапла йышăнать:

1. Россини Советлă Федеративлă Социалисăмла Республикĕн Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата Сталин йулташăн чи тĕрĕс соратникне, Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн пĕр пăркаланмасăр кĕрешекен бореца Лазарь Моисейĕвич Кагановича тăратас. Пĕрлехи пуху Лазарь Моисейĕвич Каганович йулташран РСФСР Верховнăй Советне депутата суйланма Çĕрпӳ суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтать.

2. Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикĕн Верховнăй Советне депутата суйлама ПСК(б)П Обкомĕн промышленноçпа транспорт пайĕн пуçлăхне Александр Иванăвич Пожеданăва, — 1897 çулта çуралнă, 1919 çултанпа партире тăрать, Шупашкар хулинче пурăнать, — кандидата тăратас.

Пожеданăв йулташран Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма Тĕрлемес суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтас.

Патăрйел тата Тайапа суйлав округĕ

Йелчĕк районĕнчи „Хунав" колхоз членĕсен пухăвĕ РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама

Андрей Александрăвич Жданăв

йулташ кандидатурине тата Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Федосийă Йакăвлĕвнă Çмирновă

йулташ кандидатурине палăртнă

ЙЕЛЧĔК. „Хунав" колхоз колхозникĕсемпе колхозницисен суйлав умĕнхи пухăвĕ питĕ пысăк хавасланупа иртрĕ. Пухура Патăрйел суйлав округĕ тăрăх РСФСР Верховнăй Советне, Тайапа суйлав округĕ тăрăх ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидатсем тăратасси çинчен сӳтсе йаврĕç.

Пухура чи малтан комсомолец Владимирăв йулташ сăмах тухса каларĕ. Вăл РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама Сталин йулташăн чи çывăх соратникне, ПСК(б)П Тĕпкомĕн, Ленинград облаçĕпе хула комитечĕсен çекретарне Андрей Александрăвич Жданăв йулташа кандидата палăртма сĕнет. Колхозниксем Владимирăв йулташ сĕнĕвне тăвăллăн алă çупса йышăнаççĕ.

Колхозник Никифăрăв йулташ Тайапа суйлав округĕ тăрăх ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата Çĕнĕ Хăва йалсовет председательне Федосийă Йаковлĕвнă Çмирновă йулташа палăртма сĕнӳ парать. Пуху Çмирновă йулташ кандидатурине хапăл туса йышăнать.

Йелчĕк районĕнчи „Хунав" колхоз колхозникĕсемпе колхозницисен пухăвĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Пухура 177 çын пулнă

Епĕр, „Хунав" колхоз колхозникĕсемпе колхозницисем, РСФСР Верховнăй Совет депутатне кандидатсем тăратасси çинчен сӳтсе йавнă хыççăн, çапла йышăнатпăр:

1. РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата партисĕр совет халăхĕн шанчăклă ывăлне, совет халăхĕн телейĕшĕн коммунисем ĕçĕшĕн паттăрăн кĕрешекене, аслă Сталин йулташăн çывăх соратникне, ПСК(б)П Тĕпкомĕн Ленинград облаç тата хула комитечĕсен çекретарне—Андрей Александрăвич Жданăв йулташа палăртас.

2. Пуху Жданăв йулташран РСФСР Верховнăй Советне депутата суйланма Патăрйел суйлав округĕнче баллотировкăна тăма хайĕн килĕшĕвне пама ыйтать.

Колхозниксен суйлав умĕнхи пухăвĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Епĕр, „Хунав" колхоз колхозникĕсемпе колхозницисем, Тайапа суйлав округĕ тăрăх ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидат тăратасси çинчен сӳтсе йавса, пысăк хавасланупа çапла йышăнатпăр:

1. Тайапа суйлав округĕ тăрăх ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата Çĕнĕ Хăва йалсовет председательне, 1908 çулта çуралнă, Çĕнĕ Хăва йалĕнче пурăнать,—Федосийă Йаковлĕвнă Çмирновă йулташа палăртас.

2. Çмирнова йулташран ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйланма Тайапа суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтас.

Патăрйел районĕнчи Тăрăнти Роза Люксенбург йачĕпе тăракан колхоз членĕсемпе çав йалти йединоличниксен тата учительсен суйлав умĕнхи пухăвĕ ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Филипп Алексейĕвич Матвейĕв

йулташ кандидатурине тăратнă

Пухура 67 çын пулнă

Патăрйел. Майăн 18-мĕшĕнче Тăрăнти Роза Люксенбург йачĕпе тăракан колхоз [illegible] Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата [illegible] Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председатель заместительне Филипп Алексейĕвич Матвейĕв йулташа тăратма сĕнни [illegible] Патăрйел [illegible] сăмахĕ пулса йышăнать.

Патăрйел районĕнчи Роза Люксембург йачĕпе тăракан колхоз колхоз членĕсемпе йединоличниксен тата учительсен суйлав умĕнхи пухăвĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Епĕр, Роза Люксембург йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсем, [illegible] Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидатсем палăртасси çинчен сӳтсе йавнă хыççăн, Патăрйел [illegible] Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председатель заместительне Филипп Алексейĕвич Матвейĕв йулташа палăртас.

Епĕр Матвейĕв йулташран Патăрйел [illegible] Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтатпăр.

Туçи суйлав округĕ

Çĕрпӳ районĕнчи „Ленин çулĕ" тата „Коснарийă" колхоз членĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Александра Йефимăвнă Йефимăвă

йулташ кандидатурине тăратнă

„Ленин çулĕ" колхозри пухура 55 çын пулнă

ÇĔРПӲ. Майăн 16-мĕшĕнче „Ленин Çулĕ" колхозри колхозниксен Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидатсем тăратас ыйту тăрăх пулнă суйлав умĕнхи пухăвĕ пысăк хавасланупа иртрĕ. Ак мал ан колхозница Марийă Гераçимăвнă Гераçимăвă йулташ сăмах тухса каларĕ.

Гераçимăвă йулташ сăмахĕ

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата „Ĕмĕт" колхоз колхозницине Александра Йефимăвнă Йефимăвă йулташа тăратма сĕнетĕп. Вăл тăллăххăн ӳсĕ çын. Ашшĕнчен 3 çулта йулнă. Амăшĕ йăлтах сукăр пулнă пирки, Йефимăвă йулташăн хăйĕн пурнăç тумала пулнă. 1928 çултанпа колхозра тăрать. Халĕ колхозра аслă дойаркă пулса ĕçлет.

Пур колхозниксем те Йефимăвă йулташ кандидатурине хапăл туса йышăнчĕç.

„Коснарийă" колхозри суйлав умĕнхи пухăвĕ

Пухура 99 çын пулнă.

Майăн 17-мĕшĕнче „Коснарийă" колхозра Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидатсем тăратас тĕлĕшпе пулнă суйлав умĕнхи пуху пулчĕ. Пуху Туçи суйлав округĕ тăрăх Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Александра Йефимăвнă Йефимăвă йулташ кандидатурине тăратрĕ.

Çĕрпӳ районĕнчи „Коснарийă" колхоз членĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕнче йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата Туçи суйлав округĕ тăрăх Çĕрпӳ районĕнчи Çĕнĕ Кипекри „Ĕмĕт" колхоз колхозницине Александра Йефимăвнă Йефимăвă йулташа тăратас. Вăл 1935 çултанпа колхозри стахановка-дойаркă. Лайăх ĕçленĕшĕн темиçе хут та премиленĕ. 1915 çулта çуралнă, ПСÇЛКС членĕ, чухăн хресчен çемйинче çуралса ӳснĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсен пухăвĕ Александра Йефимăвнă Йефимăвă йулташран Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма Туçи суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтать.

Чурачăк суйлав округĕ

Çĕрпӳ районĕнчи „Çамрăк вăй" колхоз членĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Марийа Макçимăвнă Макçимăвă

йулташ кандидатурине тăратнă

Пухура 107 çын пулнă

Майăн 17-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕнчи „Çамрăк вăй" колхозра ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидатсем тăратас ыйтупа суйлав умĕнхи пуху пулса иртрĕ. Пухура чи малтанах колхозник Виктăр Павлăвич Башмаков йулташ тухса сăмах каларĕ.

— Епĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама хамăрăн колхозри стахановкăна Марийа Макçимăвнă Макçимăвă йулташа кандидата тăратма сĕнетĕп. Вăл 1901 çулта çуралнă. „Çамрăк вăй" колхозра 4 çул хушши звеновод пулса ĕçлет.

Григорйĕв Данил йулташ çапла калать:

— Марийа Макçимăвнă Макçимăвă ĕçре нихăçан та аллă усман, усмасть те. Вăл колхоз ĕçĕнче тăрăшса ĕçлет. Иртнĕ çулта хăй йертсе пыракан звено участкинче пĕр гектартан 31 центнĕр тĕш тырă туса илме пултарнă. Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйласан та вăл ĕçлеме пултарать.

Çĕрпӳ районĕнчи „Çамрăк вăй" колхоз колхозникĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Епĕр, Çĕрпу районĕнчи „Çамрăк вăй" колхоз членĕсем, Чурачăк суйлав округĕ тăрăх Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Çĕрпӳ районĕнчи Йантушри „Çамрăк вăй" колхоз членне, 4-мĕш бригадăри звеновода,—партире тăмасть, 1901 çулта çуралнă,—Марийа Макçимăвнă Макçимăвă йулташа кандидата тăрататпăр.

Макçимăвă йулташ колхоз ĕçĕшĕн, Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн тăрăшса ĕçлекен çын.

„Çамрăк вăй" колхоз колхозникĕсен пухăвĕ Марийа Макçимăвнă Макçимăвă йулташран Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма Чурачăк суйлав округĕнче баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтать.

Шĕнер суйлав округĕ

„Глисер" колхоз членĕсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Çтепан Григорйĕвич Григорйĕв

йулташ кандидатурине тăратнă

ÇĔРПӲ. Майăн 17-мĕшĕнче „Глисер" колхоз колхозникĕсен пухăвĕнче чи малтан 60 çулхи колхозник, çулйĕр бригадин бригадирĕ Дмитрийĕв йулташ тухса сăмах каларĕ. Вăл Чăваш АССР Верховнăй Совет депутатне суйлама „Çамрăк вăй" колхоз председателĕ пулнă, халĕ Çĕрпӳ районĕнчи çĕрĕç пайĕн пуçлăхĕ пулса ĕçлекен Çтепан Григорйĕвич Григорйĕв йулташ кандидатурине тăратма сĕнчĕ.

„Глисер" колхоз членĕсем йышăннă постановленирен

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Çĕрпӳ районĕнчи çĕрĕç пайĕн пуçлăхне,—1908 çулта çуралнă, Çĕрпӳ хулинче пурăнать,—Çтепан Григорйĕвич Григорйĕв йулташа кандидата тăратас.

Григорйĕв йулташран Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма Шĕнер округĕнче баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтас.

Ишлей-Покровски суйлав округĕ

Ишлей районĕнчи Вăрман Сӳктерти „Париж Коммунĕ" колхоз колхозникĕсен суйлав умĕнхи пĕрлехи пухăвĕ ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама Ишлей МТСтанцинче ĕçлекен трактористкă

Аниçийа Исайĕвнă Изыкăвă

йулташ кандидатурине тăратнă

Майăн 17-мĕшĕнче Ишлей районĕнчи Вăрман-Сӳктерти „Париж Коммунĕ" колхозри колхозниксен пĕрлехи пухăвĕ пулса иртнĕ. Пухура пĕр саслăн çакăн пек постановлени йышăннă:

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидат тăратас ыйтăва сӳтсе-йавнă хыççăн, Вăрман-Сӳктер йалсоветне кĕрекен „Париж Коммунĕ" колхозри колхозниксен пухăвĕ ЧАССР Верховнăй Советне Ишлей-Покровски суйлав округĕ тăрăх депутата суйлама Ишлей МТСтанцинче ĕçлекен трактористкăна, Йетĕрнекасси йалсоветне кĕрекен Йетĕрнекасси йалĕнче 1913 çулта çуралнăскерне, партире мар большевика, Аниçийа Исайĕвнă Изыкăвă йулташа кандидата тăратать.

Пуху Изыкăвă йулташран Чăваш АССР Верховнăй Советне Ишлей-Покровски суйлав округĕ тăрăх депутата суйланма баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтать.

Шăнкăртам суйлав округĕ

Шăнкăртам районĕнчи „Сталь" колхоз колхозникĕсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Фадкла Сафиулович Сафиулин

кандидатурине тăратнă

ШАНКĂРТАМ. (Телефон тăрăх). Майăн 19-мĕшĕнче Байдерйакри „Сталь" колхозри колхозниксен суйлав умĕнхи пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура Шăнкăртам суйлав округĕ тăрăх Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидат тăратасси çинчен сӳтсе йаврĕç. Рйадовой колхозник, 60 çулхи, старик Хафизăв йулташ пухура сăмах тухса каларĕ, вăл Сафиулин йулташа ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратма сĕнчĕ. Колхозниксем унăн сĕнĕвне хапăл туса йышăнчĕç.

Хафизăв йулташ сăмахĕ

Епĕр ĕлĕк хамăрăн ĕçе пĕр тăтăк çăкăршăн сутса пурăннă. Халĕ епĕр кулаксемпе муллăсемшĕн ĕçлеместпĕр. Хамăршăн ĕçлетпĕр, телейлĕ те савăнăçлă пурнăçпа пурăнатпăр. Пирĕн йалта ĕлĕк кулаксемпе муллăсемсĕр пуçне никам та 300—400 пăт тырă туса илмен. Халĕ колхозниксем 300—400 пăтшар тата ытларах та тырă туса илеççĕ. Пирĕн вĕренме права пур, пирĕн ачасем совет шкулĕсенче коммунисла воспитани илеççĕ, ĕлĕк епĕр вĕренесси çинчен шухăшлама та пултарайман.

Иртнĕ çулти декабĕрĕн 12-мĕшĕнче епĕр хамăр сасăмăрсене коммунисемпе партире тăманнисен блокĕн кандидачĕсемшĕн патăмăр, ССР Союзĕн Верховнăй Советне депутата хамăрăн тăван çĕршывăн чи лайăх ывăлĕсемпе хĕрĕсене суйларăмăр. РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен депутатне Ленин—Сталин ĕçĕшĕн чĕререн тăрăшса ĕçлекен, партири тата партире тăман большевиксене суйламала. Епĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама чухăн хресчен çемйинчен тухнă, халĕ Шăнкăртам райĕçтăвком председателĕ пулса ĕçлекен Сафиулин йулташа кандидата тăратма сĕнетĕп.

Шăнкăртам районĕнчи „Сталь" колхоз колхозникĕсен пухăвĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Пухура 167 çын пулнă

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидат тăратасси çинчен сӳтсе йавнă май, Байдерйакри „Сталь" колхоз колхозникĕсен пухăвĕ çапла йышăнать:

Шăнкăртам суйлав округĕ тăрăх „Сталь" колхоз колхозникĕсенчен Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Шăнкăртам райĕçтăвком председательне,—1905 çулта çуралнă, 1931 çултанпа партире тăрать, пĕрремĕш Шăнкăртамра пурăнать,—Фадкла Сафиулович Сафиулин йулташа кандидата тăратас.

Епĕр Шăнкăртам суйлав округĕнчи суйлавçăсем пурте Сафиулин йулташ кандидатуришĕн тăрĕç, тесе шанса тăратпăр. Сафиулин йулташран Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Шăнкăртам суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăма хăйĕн килĕшӳне пама ыйтатпăр.

Ишек суйлав округĕ

Ишлей районĕнчи Кшавăшри Карл Маркс йачĕпе тăракан колхозри колхозниксен пухăвĕ ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама

Гурий Алекçейĕвич Херсонăв

йулташ кандидатурине тăратнă

Майăн 17-мĕшĕнче Кшавăшри Карл Маркс йачĕпе тăракан колхозри колхозниксен суйлав умĕнхи пухăвĕ пулса иртнĕ. Пухура пурте пĕр саслăн çакăн пек постановлени йышăннă:

ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидат тăратас ыйтăва сӳтсе-йавнă хыççăн, епĕр, Кшавăшри Карл Маркс йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсемпе колхозницисем, çапла йышăнатпăр:

ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама Ишлей райĕçтăвком председательне,—1904 çулта çуралнă, парти членĕ, Ишлей—Покровски йалĕнче пурăнать,—Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн пĕр пăркаланмасăр кĕрешекен çирĕп большевика Гурий Алекçейĕвич Херсонăв йулташа кандидата палăртатпăр.

Карл Маркс йачĕпе тăракан колхозри колхозниксен пухăвĕ Херсонăв йулташран ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйланма Ишек суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтать.

Çĕрпӳ суйлав округĕ

Ворошилăв йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсем РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама

Зойă Ананийĕвнă Андрейĕвă

кандидатурине тăратнă

ÇĔРПӲ. Ворошилăв йачĕпе тăракан колхоз членĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕ пит те активлă иртрĕ. Пухура 103 суйлавçă пулчĕ.

Пухура чи малтан партире тăман колхозник А. О. Дйакăнăв йулташ сăмах тухса калать. Вăл РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама Чăваш АССР Тĕпĕçтăвком председательне Зойа Ананийĕвнă Андрейĕвă йулташ кандидатурине тăратать. Дйакăнăв йулташ сĕнĕвне колхозниксем пурте хапăл туса йышăнчĕç.

Дйакăнăв йулташ сăмахĕ

Йулташсем! Епĕ колхозниксен суйлав умĕнхи пухăвне питĕ пысăк савăнăçпа килтĕм. Ĕççыннисем тĕттĕмлĕхре, куççуль йухтарса, выçăлă-тутăлă, çĕтĕк-çатăк пурăннине епĕ лайăх астăватăп. Унчухне пирĕн çĕршывра капиталиссемпе улпутсем пуç пулса, ĕççыннисене пусмăрласа пурăннă.

Халĕ, Совет влаçĕ чухне, пирĕн пурнăç палламала мар пулса тăчĕ. Епĕ пысăк та çутă çуртра пурăнатăп, манăн ачасем тутă, сывă, лайăх тумланнă. Октйаберти социалисăмла аслă революци пире те, пирĕн ачасене те тĕттĕмлĕхрен, нушалăхран ĕмĕрлĕхех çăлса кăларчĕ. Халĕ пире социалисăмла тăван çĕршывăн чи лайăх ывăл-хĕрĕсем, большевиксен партийĕ йертсе пырать. Çавăнпа та епĕр савăнса пурăнатпăр, савăнса ĕçлетпĕр.

Епĕ РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама Чăваш АССР Тĕпĕçтăвком председательне Зойа Ананийĕвнă Андрейĕвă йулташ кандидатурине тăрататăп. (Алă çупаççĕ).

Çĕрпӳри Ворошилăв йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсен пухăвĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

1. Ворошилăв йачĕпе тăракан колхоз членĕсенчен Çĕрпӳ суйлав округĕ тăрăх РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама Чăваш халăхĕн йуратнă хĕрне, ĕççыннисемшĕн тăрăшакан йулташа, çирĕп большевика, Чăваш АССР Тĕпĕçтăвком председательне,—1899 çулта çуралнă, ПСК(б)П членĕ, Шупашкар хулинче пурăнать,—Зойă Ананийĕвнă Андрейĕвă йулташа кандидата тăратас.

2. Ворошилăв йачĕпе тăракан колхоз членĕсен пухăвĕ З. А. Андрейĕвă йулташран РСФСР Верховнăй Советне депутата суйланма Çĕрпӳ суйлав округĕнче баллотировкăна тăма хăйĕн килĕшӳне пама ыйтать.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Шупашкар районĕнчи парторганизацин отчотпа суйлав пухăвĕ

(ПСК(б)П Обкомĕн отчотне сӳтсе йавни)

Районри парторганизацин отчотпа суйлав пухăвĕнче ПСК(б)П Обком отчочĕ тăрăх пренире 23 çын тухса каларĕç.

Никитин йулташ хăйĕн сăмахĕнче ПСК(б)П Обкомĕн çĕнĕ руководстви троцкиссене, бухаринçăсене, буржуалă националиссене тата çавăн йышши ытти пĕтĕм тăшмансене çĕмĕрсе тăкас йĕнĕпе пысăк ĕçсем туса иртернине кăтартать. Анчах, тет вăл, — çав вăхăтрах, сăтăрлăх сийенĕсен йулашкийĕсене пĕтересси йеригиен пырать. Ку тĕлĕшпе уйрăмах финанс оргăнĕсем, Чăвашсойуз тата ыттисем те çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Çавăн пекех вăл Обком партилĕ-политикăлă ĕçсене лайăхлатас ĕçре парти райкомĕсене çителĕксĕр пулăшнине палăртать. ПСК(б)П Обком инструктăрĕсем районсенче сахал пулаççĕ, час-часах пуçламĕш парторганизацисене тухса курмаççĕ.

Пренире тухса каланă йулташсем çĕнĕ кадрсене йертсе пырассине вăйлатма ыйтаççĕ.

— Парти Обкомĕн çĕнĕ руководстви çĕнĕ кадрсене лартас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса иртернĕ. Халĕ республикăри, районри йертсе пыракан вырăнсенче çĕнĕ çынсем ĕçлеççĕ. Анчах парти Обкомĕ вĕсемпе çителĕклĕ ĕçлемест. Акă, манахама та колхоз председателĕнчен райĕçтăвком председателĕ туса хучĕç. Анчах пире ĕçре пулăшса пыни кирлĕ, — тет Хабарăв йулташ.

Райсойуз председателĕ пулса ĕçлекен Петрова йулташ те çĕнĕ кадрсемпе ĕçлессине вăйлатмалли çинчен калать.

Коммунисем парти Обкомĕн парти пропагандипе агитаци пайĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсене те чылай палăртрĕç.

— Районри çĕрĕç пайĕ çумĕнчи парти историпе вĕренекен кружокра 20 çын вĕренет, учебниксем çитмеççĕ. Хăшпĕрисем Ленин — Сталин произведенисене вырăсла ăнланаймаççĕ. Ленин — Сталин произведенисене часрах чăвашла куçарса кăлармала, тет Озикăв йулташ. Çавăн пекех районра суйлав саккунĕсене вĕренмелли литературă та çителĕксĕр. Районра 22000 суйлавçă. Кашни суйлавçă алличчех суйлав Положенисем пулмала. Анчах районра РСФСР Верховнăй Советне суйламалли Положенисем 1700 екземпљар, Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламалли Положенисем 475 екземпљар кăна йанă.

Парткабинет пуçлăхĕсен канашлăвĕнче парти Обкомĕн тата Шупашкарти парти вĕрентĕвĕн тĕп çурчĕн районри парти кабинечĕсене куллен пулăшса пымалли çинчен каласа хăварнăччĕ. Анчах ку çĕнӳ пурнăçа кĕрсе пымасть-ха. Епĕр çĕнĕ работниксем. Пире вĕрентни, ĕçре пулăшса пыни кирлĕ, — тет парти кабинечĕн пуçлăхĕ Çергейĕва йулташ.

Парти пухăвĕ ПСК(б)П Обкомĕ ĕçĕсене çителĕклĕ тесе хак пачĕ.

Райком отчочĕ

Иртнĕ çулхи отчотпа суйлав пухăвĕ ПСК(б)П Шупашкар райкомне партилĕ-политикăлă ĕçе хуçалăх ĕçĕсемпе çыхăнтарса пыма хушнă. Парти райкомĕ ку кăтартăва пурнăçлас тĕлĕшпе парторганизацине кирлĕ пек мобилизацилемен, нимрен ытла районра, сăтăрлăх сийенĕсен йулашкийĕсене пĕтересси питĕ йерипен пырать. Иванăвăри кирпĕч савăчĕ (директăрĕ И. Иванов йулташ) 1937 çулти производствă планне 87 процент çеç тултарнă. Ку савăт 1938 çулти пĕрремĕш квартăл планне те тултарман. „Ĕçлекенсем çук“ — тет Иванов й. Рабочисене ĕçпе йала условисене лайăхлатма тăрăшмаççĕ. Кунта рабочисене пурăнмалли çуртсене сăтăрла тунă. Хăшпĕр çуртсенче, кухњасем çук, теприсенче пур, анчах вĕсемпе усă курмала мар.

Районра кустарлă промышлĕнăç кайа йулса пырать, çулйĕр строителĕствă планне тултарман. Суту-илӳ организацисем начар ĕçлеççĕ. Растратăсем чылай. Çавăн пекех Шупашкар районĕ иртнĕ çулшăн государствă умĕнчи парăмсене те парса татман. Ку ĕçре халĕ те пысăк çитменлĕхсем пур. 1938 ç. пĕрремĕш квартăлти аш-какай планне 22 процент çеç тултарнă, финанс планне 63 процент.

Йалхуçалăх ĕçĕнче те пысăк çитменлĕхсем пур. Районра кăçал, МТС çине шанса, çуракине кайа йулса, тата çителĕксĕр пахалăхпа иртерĕнĕ. МТС-ри трактăрсене сăтăрла ремонтланă пирки, çураки вăхăтĕнче чылай трактăрсем ĕçлемесĕр ларнă. Çапла вара мĕн пур акмалли площĕдрен 43 проц. çеç çейăлкăсемпе акнă.

Вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пушшех çитменлĕхсем нумай. Сăтăрçăсем чи малтан вылăх-чĕрлĕхсен шутне чакарас тĕлĕшпе ĕçленĕ. Сăтăрлăх сийенĕсен йулашкийĕсене пĕтерес ĕç халĕ те начар пырать. Колхозсенче йалхуçалăх ертелĕн уставĕсене пăснисем нумай пулнă. „Трудовик“ колхоз правленийĕ, колхозниксен пухăвĕнче сӳтсе-йавмасăрах, 5 лаша сутнă, ун хыççăн 3 кун ĕçнĕ.

ПСК(б)П райкомĕ партиллĕ-политикăлă ĕçе йĕркелес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленĕ. Райком парторгсене çителĕклĕ йертсе пыман. Пуçламĕш парторганизацисем пухусене вăхăтра иртермеççĕ, уйрăм коммунисем парти порученисене мĕнле пурнăçланине тĕрĕслесе пымаççĕ. Хăшпĕр пуçламĕш парторганизацисенче парти дисциплинине йапăхтарса йана. Иртнĕ çулсенче Иккасси колхозĕ районра малти вырăнта тăнă. Халĕ колхоз кайа йулнă. Кунти пуçламĕш парторганизаци начар ĕçлет. Райком инструктăрĕ Галинăв йулташ та парторганизацине çителĕклĕ пулăшса пыман.

Йулашки вăхăтра 22 çынна районри йертсе пыракан вырăнсене ĕçе лартнă. Анчах парти райкомĕ вĕсемпе мĕнле ĕçлени çинчен докладчик каламарĕ. Комсомолпа, сочувствуйушчисемпе, партире тăман активпа та çителĕксĕр ĕçленĕ пирки парти речĕ йерипен ӳсет. 1938 çулта 8 çынна анчах партине илнĕ, 4 кандидата члена куçарнă. Пĕр çынна сочувствуйушчисен ретне илнĕ.

Докладчик каланă тăрăх коммунисене пурне те парти вĕрентĕвне хутшăнтарнă пек курăнать. Анчах ĕç урахла. Райком инструктăрĕ Галинăв, парти кабинечĕн пуçлăхĕ Çергейĕва йулташсем тухса каланă тăрăх, хăшпĕр коммунисене парти вĕрентĕвне вуçех хутшăн арман. Акă, Карачурари Игнатйĕв, Сарапакассинчи Йегорăв йулташсем ниçта та вĕренмеççĕ.

Çавăн пекех докладчик РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлама мĕнле хатĕрленни çинчен çителĕклĕн чарăнса тăмарĕ. Пренире тухса калакансем те ку ыйтăва çивĕччĕн лартмарĕç. Райĕç ăвком председателĕ Хабарăв йулташ çур сехет ытла каларĕ. Анчах суйлав çинчен калама сăмах тупаймарĕ. Районри парторганизаци ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕн суйлавне иртернĕ хыççăн лăпланса ларнă, уйрăмах суйлав саккунне вĕрен сси йапăх пырать. Çийелтен пăхсан, районра 282 кружок ĕçлет пек курăнать, 420 агитатăр. Анчах суйлав саккунне вĕренес ĕçе начар йĕркеленĕ. Унтан та ытларах, районри мĕн пур суйлавçăсенчен 50 процентне суйлав саккунне вĕренес ĕçе хутшăнтармаçч. Гололейиха йалсоветĕнче суйлавçăсене вĕрентме пĕр кружок та туман. Кунта 10 коммунис, 7 учител. Мĕн тăваççĕ ши вĕсем? Паникасси, Тулик Хураски йалсовечĕсенче кружоксене йачĕшĕн çеç тунă, вĕсем ĕçлемеççĕ. Çĕнйал йалĕнче пĕр Степан Романăв учител-агитатăр çеç лайăх ĕçлет. Вăл 7 заљати иртернĕ. Ытти агитатăрсем йĕркелĕ ĕçлемеççĕ.

ПСК(б)П райком отчочĕ тăрăх пренире тухса калама 39 çын çырăннă, 25 çын тухса каланă. Коммунисем райком ĕçне çителĕксĕр критиклерĕç. Вĕсем нимрен ытла, хуçалăх ĕçĕсем çинчен чарăнса тăчĕç. Антонăва (Алгешри парторг), И. Александрăв (Иккассинчи парторг) йулташсем çеç парти райкомĕ пуçламĕш парторганизацисене çителĕксĕр пулăшнине палăртрĕç. Райком инструктăрĕ Галинăв йулташ райком çекретарĕсем инструктăрсене кирлĕ пек пулăшманни çинчен каларĕ.

Пуху ПСК(б)П райкомĕн ĕçне çителĕклĕ тесе хак пачĕ. Райком членĕсене 9 çынтан суйланă, тата 3 кандидат. Ревизи комиççине 3 çынтан суйланă.

Пуху хупăннă хыççăн райкомăн пĕрремĕш заседанийĕ пулса иртрĕ. Райкомăн пĕрремĕш çекретарне Маљутин йулташа, иккĕмĕш çекретарне Никитин йулташа, виççĕмĕш çекретарне Караушĕв йулташа суйласа хăварнă. Районри хаçат редактăрĕ пулса ĕçлеме Александрăв йулташа суйланă.

П. Перлов.

Малтанхи утăмсем

ШĂХАСАН. Шуркассинче 8 уйăх кайала кандидатсен группи кăна пулнă. Унта парти членĕ 2 çын тата пĕр кандидат тăнă. Иртнĕ çулти октабĕр уйăхĕнче пуçламĕш парторганизаци туса парторга Йефремăв йулташа суйласа хăварнă хыççăн, партире тăманнисем хушшинче лайăх ĕçленипе çĕнĕрен 3 çынна: Александрăв, Филиппăв тата Çеменăв йулташсене кандидата илнĕ. Филиппăвна Александрăв йулташсем 4 уйăх ĕнтĕ колхоз председателĕсем пулса ĕçлеççĕ. Çеменăв йулташ Ворошилăв йачĕпе тăракан колхозра çуринчен лайăх ĕçлекен ударник. Кусемсĕр пуçне тата Филиппăв Александра, Çеменăв Çемене тата Николайĕв Ивана сочувствуйушчисен ретне илнĕ. Вĕсем пурте колхозсенчи чи примерлă колхозниксем пулса ĕçлеççĕ.

Ворошилăв йачĕпе тăракан колхозра Çеменăв Çемен фермă пуçлăхĕ пулса ĕçлинчен, сыснасем нумай вилеччĕç, ним сас-хурасăр сухалнисем те пулаччĕç. Халь кунта пĕр сысна та вилмест.

Коммунисем хăйсен политпĕлĕвне хăпартас йĕнĕпе питĕ тăрăшса вĕренеççĕ. Çĕнĕрен илнĕ кандидатсем: Филиппăв Ивана, Александрăв Петр йулташсем пĕр заљатирен те йулмаççĕ, вĕренессе те аван вĕренеççĕ. Парторг Йефремăв йулташ вĕсене заљатине хатĕрлесе хыта пулăшать: килĕсене кайса мĕнле вĕреннине тĕрĕслет, ăнланман ыйтусене ăнлантарса парать.

Парти организаци комсомол йышне те ӳстерме тăрăшать. Кунта комсомол политкружокĕ те лайăх ĕçлет. Сойуэра тăман çамрăксене 8 çынна политкружока хутшăнтарса комсомола илнĕ. Çĕнĕрен илнĕ комсомолка Иванова Йевдокийа йертсе пыракан пионерсен иккĕмĕш отрйачĕ шкулта чи лайăх, примерлă отрйад шутланать.

Парти организаци колхозсене хуçалăхпа политикă йенчен çирĕплетес ĕçре чылай çитĕнӳсем турĕ. 1936—37 çулсенче Ворошилăв йачĕпе тăракан колхоз районра начар ĕçлекеннисенчен пĕри пулнă. Колхоз председателĕ Перемейĕв пулнă чухне колхоз хуçалăхĕ пĕтĕмпех пăлăхса çитнĕччĕ. Вăл колхоз хуçалăхне сахал мар сийен кӳнĕ. Критикăна самокритикăна пĕтерсе лартнă.

Парти организаци Перемейăвăн йĕркесĕр ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларчĕ. Вара колхозниксен пухăвĕ Перемейăва колхоз председателĕнчен кăларса, ун вырăнне парти кандидатне — Филиппăв йулташа суйласа хăварчĕ. Халĕ Ворошилăв йачĕпе тăракан колхозăн ĕçĕсем йусансах пыраççĕ. 1938 çулхи çуракинче колхоз малти вырăна тухрĕ.

Колхозниксем хушшинче РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламалли Положенисене вĕренессине лайăх организацилене.

А. Никифăрăв

Шăхасан райкомĕн инструк тăрĕ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Финанс Халăх Комиссариатĕнчи пуçламĕш комсомол организацин уçă пухăвĕ.

Цыганов фото-ӳкерчĕкĕ.

Суйлав кампанине активлăн хутшăнасси—профсойузсен чыслă ĕçĕ

ЧАССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп суйлав комиççи Професçилĕ Сойузсен облăç комитечĕсен председателĕсен тата Шупашкар хулинчи предприйатисенчи профсойуз комитечĕсен, хапрăк-савăт комитечĕсен председателĕсен канашлуне туса иртерчĕ.

Професçилĕ Сойузсен обкомĕсем суйлав кампанине начар хутшăннă. Професçилĕ Сойузсен Тĕп Совечĕ профсойуз организацисене Сойузлă тата автономлă республиксен Верховнăй Совечĕсен суйлавне иртерне май политикăлă-масçăлă ĕçе анлăн сарма хушнă. Анчах та профсойузсен облăç комитечĕсем çак постановленине хăйсем те, сӳтсе-йавман, профсойуз членĕсем патне те çитермен. Медицинăпа санитари ĕçĕнче тата пĕлитикăпа çутĕç учрежденисенче ĕçлекенсен професçилĕ сойузсен обкомĕсем (председателĕсем Степанăвпа Сурăв йулташсем) суйлава хатĕрленесси районсенче мĕнле пыни çинчен районсенчен сводкăсем ыйтса çеç лараççĕ. Профсойуз членĕсене суйлав кампанине активлăн хутшăнтарас тĕлĕшпе нимĕн те туман.

Суйлав кампани хĕрсе пырать. РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама кандидатсем тăратасси пуçланчĕ. Çапла пулин те профсойузсен облăç комитечĕсен председателĕсем нумайĕшĕ районри тата вырăнти комитетсем суйлав кампанине мĕнле хутшăнни çинчен хăйсем те тĕплĕн пĕлсе тăраймаççĕ. Хăшпĕр сойузсен обкомĕсем ССР Сойузĕн Верховнăй Совет суйлав кампани вăхăтĕнче тунă ĕççене çирĕплетес тĕлĕшпе пачах ĕçлеме пăрахнă.

Кооперацинче ĕçлекенсен Професçилĕ сойузĕн обкомĕ (председателĕ Филиппăв йулташ) ССР Сойузĕн Верховнăй Совет суйлав кампани вăхăтĕнче 189 кружок ĕçленĕ, агитатăрсемпе пропагандиссем çĕршер çын пулнă тесе мухтанать. Халĕ мĕнле? Халĕ çак Сойуз йенепе РСФСР тата ЧАССР Конституцийĕсемпе суйлав Положенисене вĕрентекен кружоксем 72, агитатăрсем 69 çын çеç тăрса йулнă.

Государствă суту-илӳ ĕçĕнче ĕçлекенсен Професçилĕ Сойузĕ те суйлав кампанине питĕ начар хутшăннă. Чебторгра, „Пахча-çимĕç Сойузĕнче, 3-мĕш номĕрлĕ магазинра ĕçлекенсене халĕ те суйлав Положенисене вĕрентме тытăнман. Çав коллективсенче пурĕ 112 çын ĕçлет, вĕсем пурте профсойуз членĕсем. Анчах вĕсене вĕрентес, суйлава хатĕрлес тĕлĕшпе обком та, вырăнти комитетсем те нимĕн те туман.

Шăнкăртам, Çĕрпӳ, Канаш районĕсенче суйлав литературисем çук. Суту-илӳ организацисем вырăнсене суйлав литератури çитерес тĕлĕшпе питĕ начар ĕçлеççĕ. Анчах государствă суту-илӳвĕпе потребкооперацинче ĕçлекенсен професçилĕ Сойузсен обкомĕсем çак ĕçсен айккинче тăраççĕ. Йалсенчи магазинсенче спичка, краççин, супăнь, тавар çукки те суту-илӳ организацийĕсем, тата унта ĕçлекенсен профсойузĕсем суйлав кампанине начар хутшăнни çинчен калаççĕ.

Шупашкарти тир-сăран савăтĕнче, кирпич савăтĕнче, спирт савăтĕнче суйлава хатĕрленес ĕç начар пырать. Савăт комитечĕсем рабочисене, служащисене РСФСР тата ЧАССР Конституцийĕсемпе суйлав саккунĕсене вĕрентес ĕçе кирлĕ пек организацилемен. Спирт савăтĕнче рабочисем, инженерла-техникла работниксем 212 çын, анчах та вĕсене вĕрентме 7 кружок çеç организациленĕ, çавнашкал пысăк кружоксенче вĕренӳ пахалăхĕ те начар тарать ĕнтĕ. Предприйатисенче хĕрлĕ кĕтессем пур, анчах вĕсенче чĕрĕ ĕç, агитацилĕ-массăлă ĕç, суйлав литературисем, плакатсемпе лозунгсем çук.

Профсойуз организацисен суйлава хатĕрленессине вăйлатмала. Халĕ предприйатисенче, учрежденисенче политикăлă агитаци ĕçĕ нихăçанхинчен вăйлă пулмала. Агитатăрсемпе пропагандиссем йарса йалсоветсене, суйлав комиççисене пулăшассине вăйлатас пулать.

Пронин.

Суйлав кунĕ тĕлне

КАНАШ. (Хамăр корр.). Канашри вакунсем йусакан савăтра хут сахал пĕлекен рабочисемпе килхуçи хĕрарăмĕсем пĕтĕмпе 154 çын. Вĕсене вĕрентме 40 куљтармейец уйăрнă. Куљтармейецсем хут сахал пĕлекенсен килĕсене çӳресе вĕрентеççĕ.

Савăт çумĕнче хут сахал пĕлекенсен шкулĕ ĕçлет. Çак кунсенче шкул 28 çынна вĕрентсе кăларчĕ. Вĕсенчен тылайĕшĕ вĕренӳре аван ĕлкĕрсе пычĕç. Акă Илйина йулташ производствăра та йаланах малта пырать. Вăл савăта пырса кĕрсенех, малтан тăпра ĕçĕнче ĕçленĕ. Лайăх тăрăшса ĕçленипе кура, ăна савăт дирекцийĕ бригадира лартнă.

Хут сахал пĕлекенсен шкулĕнчен Илйина йулташ „отлично“ паллăсемпе вĕренсе тухрĕ.

А. Кошкина, А. Терентйĕва, С. Алексейĕва, Петрова йулташсем те „отлично“ та „хорошо“ паллăсемпе вĕренсе тухрĕç.

Халĕ шкул хут сахал пĕлекен 20 çынна вĕрентме тытăнчĕ. Савăтри хут сахал пĕлекен рабочисемпе килхуçи хĕрарăмĕсем РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кунĕ тĕлне пурте хут пĕлекен пуласшăн тăрăшаççĕ.

Анчах Канаш хулин çутĕç пайĕ савăтри хут сахал пĕлекенсен шкулне çителĕклĕн йертсе пымасть. Хут пĕлменлĕхе пĕтерес ыйтупа кăçалхи çул хула çутĕç пайĕнче ĕçлекенсем пĕрре те кăтарту паман.

Арк. Нестерăв.

Куљтработник ĕçлемест

ШĂХАСАН. Малтикасри Сталин йачĕпе тăракан ертелĕн музăкă инструменчĕсем сахал мар. Балалайкă, скрипкă, патефон, хут купăс т. ыт. те пур. Анчах куљтработник Митрофанăв йулташ çак инструментсемпе усă курса рабочисен пушă вăхăтне куљтурлă иртерессине организацилемен. Музăк инструменчĕсем ахалех сапăнса выртаççĕ, вĕсемшĕн ответ тытакан çук. Малтан ĕçленĕ радио аппаратне те ахалех шкафра тытса усраççĕ.

Кружоксем те ĕçлемеççĕ. Каçхине массăлă вăйасем, ташăсем пулмаççĕ. Анлантарулă ĕç йулашки вăхăтра чарăнса ларчĕ. РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламалли Положенисене вĕренессине организацилемен.

П. Йегорăв.

Вĕренӳ çулне бољшевикла вĕçлер

Пирĕн шкулсенче вĕренекенсем темиçе вуншар пин ача çак кунсенче государствă тĕрĕслевне тăрать. Цинĕшер çамрăксем туллимар вăтам тата вăтам шкулсенчен вĕренсе тухса, педучилищăсене, техникумсене, аслă шкулсене кĕме йе социалисăм строительствин тĕрлĕ участкисенче ĕçлеме ĕмĕтленеççĕ. Вĕсен пĕлĕвĕсем çирĕп пулмала. Пĕлӳ тĕрĕслевĕсенче вĕренекенсенчен ыйтма тивĕçлине пĕчĕклетсе ыйтни пулсан, ăна государствăна улталани вырăнне хумала. Совет шкулĕ пур йенĕпе те лайăх пĕлӳлĕ политикă тĕлĕшĕнчен çирĕп хĕçпăшалланнă, куљтурлă çамрăксем кăна вĕрентсе кăлармала.

Сталин йулташ 1928 çулта комсомолăн 8-мĕш сйесĕнче каланă:

„Пурнăç тăвас тесен, пĕлмеле, аслăлăха алла илмеле. Пĕлес тесен, вĕренмеле. Çине тăрса, тимлĕн вĕренмеле... Пирĕн умра крепăç тăрать. Вăл крепăçа, унăн нумай йенлĕ пĕлтерĕшĕсемпе пĕрле, аслăлăх тесçĕ. Çак крепăçа пирĕн мĕнле пулсан та çĕнтерсе илмеле. Аслăлăха алла илмеле, пур тĕрлĕ аслăлăхсемпе те бољшевик-специалиссен çĕнĕ кадрĕсене пăхса çитентермĕлĕ, вĕренмеле, харсăрăн çине тăрса вĕренмеле — çакнашкал халĕ задачă“.

Шкулсенчи пĕлӳ тĕрĕслевĕ государствă ĕçĕ. Ку ĕçе тума çутĕç пайĕсен представителĕсем, аслă шкулсенчи профессăрсемпе аслăлăх работникĕсем, çавăн пекех тата шкулти преподавателсенчен уйăрнă ассистентсем хутшăнаççĕ.

Уйăрса çирĕплетнĕ ассистентсем пĕлӳ тĕрĕслевĕсен обйективлăхĕшĕн государствă умĕнче ответлă пулса тăраççĕ.

Пирĕн учителĕсемпе ачасем хаљхи вăхăтра пĕр хĕрӳлĕ ĕмĕтпе — государствă тĕрĕслевĕ витĕр чыслăн тухас ĕмĕтпе пурăнаççĕ. Пĕлӳ тĕрĕслевне иртерме вĕсене пысăк тимлĕх кирлĕ. Çав кунсенче шкул пур йенчен те лайăх тĕрĕслесе лартнă сехет механисăмĕ пек ĕçлемеле.

Учителĕсене партипе правителĕствă çамрăк ăрăва коммунисла вĕрентсе çитĕнтерес хисеплĕ те пысăк ĕç шансă панă. Учителсем шкулăн пĕлӳлĕхĕпе куљтурлăхне, вĕренекенсен дисциплинине хăпартассишĕн кĕрешмеле. Куљтурă, дисциплинă тĕлĕшĕнчен учител чи малтан хăй пример пулса тăмала, унăн Сталин йулташ „кадрсем пурне те татса параççĕ“ тесе каланине тивĕçлĕ çын пулмала.

Шкулти вĕренӳпе воспитани ĕçне кăтартулăн йĕркелессишĕн, ачасене вĕренӳре çĕр процентĕпех ĕлкĕрсе пыракан тăвассишĕн бољшевикла кĕрешекен учителсен речĕ пирĕн Чăваш республикинче ӳссех пырать. Ишлей районĕнчи Йарапайкассинчи туллимар вăтам шкулĕнче ĕçлекен К. И. Тетерина учителницă вĕренӳ пахалăхне çулран-çул хăпартса пырать, ун класĕнчи ачасем вĕренӳре пурте лайăх ĕлкĕрсе пыраççĕ. Шупашкар хулинчи 2-мĕш номĕрлĕ вăтам шкулти А. Н. Пчелина, 3-мĕш номĕрлĕ шкулти А. В. Черпакова, А. И. Краснощокăва учителницăсен класĕсенче те кайа йулса пыракан ачасем çук. Малта пыракан учителсем ачасене пурне те лайăх ĕлкĕрсе пыракан тăвассишĕн куллен çине тăрса, хăйсен ĕçне йуратса, хастарлăн ĕçлеççĕ.

Шкулăн кашни вĕренекен çине тимлĕн пăхмала, вĕренекенĕн ĕçне çăмăллатмала, ăна хăйĕн ашшĕ-амăшĕпе государствă умĕнчи парăмне тĕрĕс татма пулăшмала.

Совет шкул ачин пĕрремĕш тӳрĕ ĕçĕ — вăл лайăх вĕренесси. Вĕренекене ĕçре куллен пулăшса пымала.

Тутаркас районĕнчи хăшпĕр шкулсенче ачасем вĕренме пăрахса, айакка ĕçлеме кайнисем пур. Сăмахран, Мăн Токшихри туллимар вăтам шкултан кăçалхи апрелпе май уйăхĕсенче 8 ача пăрахса кайнă.

Районри çутĕç пайĕ кун çине вăхăтра çаврăнса пăхман, çавна пула, районта ытти шкулсенче те ачасем сахал мар вĕренме пăрахнă.

Пирĕн республикăра кайа йулса пыракан шкулсем самайах тупăнаççĕ. Çĕмĕрле районĕнчи Тăванри туллимар шкулта Куçмин учител вĕрентекен географипе истори предмечĕсем тăрăх ачасем ĕлкĕрсе пынине кăтартакан хисеп 45—50 процент çинче тытăнса тăрать. Уроксене вăл хатĕрленсе пымасть, плансем тумасть, хăйĕн предмечĕсемпе кирлĕ литературă çырăнса илмест, методикăна пĕлмест. Унран, есĕ уроксене мĕншĕн хатĕрленместĕн, мĕншĕн плансем тумастăн, тесе ыйтсан, вăл: „мĕншĕн çырмала, епĕ ахаљ те лайăх пĕлетĕп“, — тесе ответлет.

Шăмăршă районĕнче вăрманта ларакан темиçе шкул пур. Вĕсенче вăрман рабочисен, вăрманпромхоз инженерĕсемпе техникĕсен ачисем вĕренеççĕ. Вăрманпромхоз çав шкулсене лайăх пăхмала пек, анчах чăннипе илсен, ĕç пачах урăхла. Баскакра вăрманпромхоз айăпĕпе хĕллехи шартлама сивĕ вăхăтсенче шкул вутăсăр аптăранă, çавăнпа та ачасене урокра кĕрĕксем, çĕлĕксем тăхăнса ларма тӳр килнĕ.

Вăрманта ларакан шкул çакнашкал мăшкăл тӳснине, нимĕн те мар, шкулăн йĕркелĕ пурнăçне пăсас тесе тунă ĕç вырăнне çеç шутламала. Çав шкулта хĕл каçиччен районри çутĕç пайĕн пĕр представителĕ те пулман. Мĕн пурĕ унта 3 клас, учител 1 кăна, ăна никам та пулăшакан çук. Уроксем 45 минут вырăнне, 90 минута çити тăсăлса иртеççĕ, дисциплинă йапăх.

Партипе советăн районри руководителĕсен кашни шкула, кашни савăта, колхоза пĕлсе тăнă пекех, лайăх, тĕплĕн пĕлсе тăмала. Вĕсен кашни шкул директăрне, учителе, кашни çутĕç работникне уйрăммăн пĕлмеле.

Шкул директăрĕн ĕçĕ пысăк та ответлă. Вăл пĕтĕм шкул пурнăçне йертсе пырать. Учител хăйĕн ĕçĕнче пулăшу чи малтан директăртан ыйтать, панă ĕçе куљтурлăн тăвас тĕлĕшрен директăр шкулта пурне те пример кăтартмала. Учителе ĕçре йертсе, пулăшса пырас тесен, директăр учителрен пур йенĕпе те çӳлте тăмала, унсăрăн шкул ĕçĕ ӳкме пултарать.

Çак çулта Чăваш республикинче çутĕç системи тăрăх шкулсенчен пĕтĕмпе 23.965 çын вĕренсе тухать, вăл хисепрен: пуçламĕш шкулсенчен — 10.796 çын, туллимар вăтам шкулсенчен 12.117 çын, вăтам шкулсенчен 1.052 çын вĕренсе тухать.

Совет шкулĕн пĕлӳ тĕрĕслевĕсем иртерес тĕлĕшпе çителĕклĕ опыт пур. Тĕплĕн йĕркеленĕ пĕлӳ тĕрĕслевĕ çамрăк ăрăва вĕрентсе, коммунисла воспитани парса çитĕнтерес ĕçĕн пысăк тапхăрĕ пулса тăрĕ.

Вăтам шкултан вĕренсе тухакансене уйрăмах тимлĕн пăхмала. Вĕсене общĕствăлă ĕçри тĕрлĕрен ытлашши нагрузкăсенчен хăтармала, вĕсем валљи пысăк квалификацилĕ консуљтацисем организацилемеле, хăшпĕр дисциплинăсем тăрăх уйрăм заљатисем туса иртермелĕ.

Пĕлӳ тĕрĕслевĕн ăнăçлăхĕ ăна йĕркеленинчен килет. Тĕрĕслĕве кашни уйрăм предметпа (вырăс чĕлхипе, литературăпа, историпе, географипе тата ытти те) хăйне уйрăм кабинетра иртермелĕ, кабинетсене тĕрĕслӳ вăхăтĕнче кирлĕ пулма пултаракан нагљаднăй пособисемпе пуйанлатмала. Кунта паллах, вĕренекене программăри пĕр-пĕр ыйту çине тӳрех ответ паракан материал йе пособи пулма тивĕçлĕ мар. Вĕренекен хăйĕн ответне пысăк мар опытпа, картă çинче кăтартнипе, схемă йе картинă туса панипе çирĕплетме пултартăр.

Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче пĕр класрах иккĕмĕш çула 6821 çын йулнă, вĕсенчен йалти шкулсенче 6519 çын, хуларисенче — 302 çын. Вĕренсе тухмалли класенче иккĕмĕш çула йулнисем: 4-мĕш класенче 1258 çын, 7-мĕш класенче 519, 10-мĕш класенче 35 çын йулнă.

Пĕр класрах иккĕмĕш çула массăлăн йуласси кăçал та питĕ пысăк хăрушлăх пулса тăрать. Ку хăрушлăхран сыхланас тесен, шкулсен ĕç пахалăхне татăклăн çĕклемеле, çутĕç оргăнĕсен шкулсене йертсе пырассине тĕпрен лайăхлатмала, партипе совет организацисен шкулсене йертсе пырассине тĕплен лайăхлатмала, партипе совет организацисен шкул çине хыта пăхмала.

Кунпа пĕрлех шкулти воспитани ĕçне çӳлĕ вырăна лартассишĕн вирлĕн кĕрешмеле.

Кашни ачаран тивĕçлĕ совет гражданинĕ, аслă тăван çĕршывăн хĕрӳлĕ патриочĕ, коммунисла общĕствăн идейлă, дисциплинăлă, куљтурлă тата пултарулă строителĕ туса çитĕнтересси — совет шкулĕпе совет учителĕн тӳрĕ ĕçĕ пулса тăрать. Пирĕн шкулсене, пирĕн çамрăк ăрăва моралљне политикă тĕлĕшĕнчен таса тытассишĕн, пирĕн ачасемпе çамрăксем хушшинче ирсĕр йут шухăшсем сарма пăхакан тăшмансене вĕсне çитиччен тăрă шыв çине кăларса, вĕсене пуçĕнех пĕтерессишĕн шкулти кашни работник, кашни çутĕç оргăнĕ хĕрӳлĕн кĕрешмеле.

Совет учителĕсен мĕн пур вăйхăватне шкулсем çинчен партипе правителĕствă тата Сталин йулташ кăтартса панине пурнăçлас ĕçе, вĕренӳре ĕлкĕрсе пырайманнине тата пĕр класра иккĕмĕш çула йуласине пĕтерес ĕçе мобилизацилер.

Пĕлӳ тĕрĕслевне бољшевикла йĕркелесе, кашни вĕренекене чăн-чăн тимлĕхпе, чăн-чăн кăмăлран пăхса, кăçалхи вĕренӳ çулне ăнăçлăн вĕçлер.

Судаков.

И. Д. ПАПАНИН
Совет Сойузĕн Геройĕ

„Ҫурҫĕр поҫусĕ" станцине тунăранпа ҫулталăк ҫитрĕ

1937 ҫулхи майăн 21-мĕшĕнче тăвата моторлă йавăр самоҫот, Совет Сойузĕн Геройĕ М. В. Водопйанăв тытса пынипе, Ҫурҫĕр поҫусĕ патĕнчи пăр ҫине совет ҫыннисен ушкăнне илсе ҫитерсе антарчĕ. Ҫĕр чăмăрĕн чи варринче, уп патне пырас тесе хăйулă тĕпчевҫĕсем темиҫе ĕмĕр хушши хăтланнă, совет ҫĕршывĕн йалавĕ вĕлкĕшме пуҫларĕ.

Самоҫот илсе пырса антарнă ҫынсем чи пирвайхи кунран пуҫласах тĕрлĕ йенлĕ ăслăлăхлă ĕҫсене тума тытăнчĕҫ. Вĕсем талăкра тăватă хутчен ефир тăрăх метеорологилĕ сводкăсем парса тăма пуҫларĕҫ.

Часах Совет Сойуз Геройĕсен: В. С. Молăкăвăн, А. Д. Алексейĕвăн тата И. П. Мазурукăн самоҫочĕсем пирĕн пата, пăр ҫинче хĕл касма йулнă тăватă ҫын патне, ăслăлăх ĕҫĕсене тумали тĕп материалсем, продуктăсем тата пӳрт-ҫуртра тыткаламали хатĕрсем илсе ҫитерсе пачĕҫ. Ҫурҫĕр поҫусĕн ĕмĕрхи вăрттăнлăхĕсене тупса вĕренес тĕлĕшпе хĕрӳлĕ, интереслă пурнăҫ пуҫланчĕ.

Ҫурҫĕрти Пăрлă океанра сахал мар експедицисем пулнă. Поҫара тĕпчесе вĕренес тĕлĕшпе ĕҫлене ҫак ҫынсен йачĕсем: Седов, Брусилăв, Лаптевсем, Дежнĕв, Русанăв, Пири, Пахтусăв, Баренц, Нансен, Амундсен, Норденшеҫд тата ытти сен йачĕсем пуриншĕн те паллă. 1909 ҫулта Ҫурҫĕр поҫусне Роберт Пири ҫитсе курнă, вăл ҫав похода 23 ҫул хушши хатĕрленнĕ. Унтан поҫуса Амундсенпа Берд вĕҫсе ҫитнĕ. Поҫуса ҫитнĕ пулнă, анчах та унăн вăрттăнлăхĕсене тупса тĕпчесе вĕренеймен.

Ҫав уйрăм хăйулă ҫынсем темĕн пек тăрăшса ĕҫленĕ пулсан та, вĕсем ăслăлăха питех те сахал ĕҫсем панă. Ҫав ҫынсем пĕччен шĕрен пулнă. Кунтан ĕнтĕ Ҫурҫĕр поҫусне тĕпчесе вĕренес тĕлĕшпе ĕҫлене совет ҫыннисен ҫитĕнĕвĕ йепле пулни уҫҫăнах курăнат, вĕсене пĕтĕм ҫĕршыв хатĕрлесе кăларса йанă. Пире Ҫурҫĕр поҫусĕнче ССР Сойузĕн полипречĕсен функцисене кăна пурнăҫа кĕртме тиврĕ.

Советăн тăвата ҫынни чи вĕрҫĕнĕ ăслăлăх оборудăванипе, чаплăн хатĕрлесе, пĕр ҫул ҫурă пурăнмалăх тутлă апат-ҫимĕҫсем хатĕрлесе парса кăларса йанă. Експедици ĕҫĕ ăнăҫлăн пултăр тесе мĕн тумалли пурне те тунă пулнă.

Ийунĕн 6-мĕшĕнче советăн поҫарти „Ҫурҫĕр поҫусĕ" станцине официаллăн уҫнă. Ҫав кунхипех епĕр, ҫĕнĕ станцинче хĕл касма йулакансем, пире поҫус ҫине илсе ҫитерес тĕлĕшпе чаплă вĕҫев тунă хăйулă та паттăр йулташсемпе сывпулашса уйăрăлтăмăр. Вĕсемпе пĕрле епĕр Пысăк Ҫĕр ҫине хамăрăн аслă тăван ҫĕршывăма, хамăрăн йуратнă, тăван Сталин патне, Ватам Арктикăн хăмиччен никам тĕпчесе вĕренмен талкăшĕсене кĕрешсе илес ҫĕрте пире чĕрейвай парса хавхалантаракан патне, хĕрӳлĕ салам йатăмăр.

Пăр ҫинче пурăнна чухне, кашни кун тенĕ пекех мĕйле те пулин ҫĕнĕ ĕҫсем пулса пынă. Пĕр отрыти хыҫҫăн тепри пулса пынă.

Ийунĕн 4-мĕшĕнче П. П. Ширшов чи малтанхи гидрологи станцине туса иртерчĕ. Куҫса ҫӳрекен пăр айĕнче, 250 метртан пуҫласа 610 метра ҫити таранĕн ҫĕрте, Атлантически океанĕнчи ăшă шыв йуххине тупса палартнă. Ҫав шыв йуххинче ҫӳлерех тата анатарах сивĕ шыв йуххине палартнă.

Ийунĕн 7-мĕшĕнче, ҫурҫĕр широтин 88 градус та 54 минутинче тата хĕвеланăҫ долготин 20 градуҫĕнче пырса, епĕр океан тарăнăшне виҫсе пăхрăмăр. Океан тарăнăшĕ 4.220 метр пулни палăрчĕ.

Часах ҫакă паллă пулчĕ: Нансен Пăрлă Океанăн чи вăта пайĕнче нимĕнле пурнăҫ та ҫук тесе калани тĕрĕс пулман. Планктоннăлă ҫеткăна 1.000 метр тарăнăшне йарса пăхсан, унта молӳскăсем, личинкăсем, медузăсем, раксем—тарăн шывсенче пурăнакан ҫутă та хĕрлĕ тĕслĕ чĕрчунсем пекскерсем чылай лекнĕ. Пысăк широтасенче епĕр шурă упасене, тинĕс мулкачисене тĕл пултăмăр. Пирĕн ҫинче чайкăсем тата пуночкăсем вĕҫечĕҫ.

Й. К. Федăрăв, Арктикăн чи вăта пайĕнче, никам пулса курман широтасенче магнетисăма вĕренес тĕлĕшпе питех те кирлĕ ĕҫсене чылай туса иртерчĕ.

Пирĕн станци хăй куҫса ҫӳрени те пысăк интереслă пулса тăчĕ, мĕншĕн тесен вăл вăта ҫĕрти поҫар-бассейнинче пăр йухăмне сăнаса вĕренме май пачĕ. Пирĕн експедици ĕҫĕн резуҫтачĕсем пăрсем Ҫурҫĕр поҫусĕ тавра тата поҫар бассейнин, таврашĕнче куҫса пыраҫҫĕ, тесе каланине суйăна кăларчĕҫ.

Й. Т. Кренкел радиостанцийĕ тăрăх епĕр хамăран аслă халăхпа, пĕр майах ҫыхăну тытса пурăнтăмăр.

Пирĕн куҫса ҫӳрекен пăр ҫĕмĕрĕлсе ванма пуҫласан, пире ҫав пăр ҫинчен илсе кăларма парти, правительства, Сталин йулташ мĕн пур техникăна мобилизацилерĕҫ. Ҫав кунсенче пирĕн тăван Сталин пирĕншĕн ҫав тери йуратса, тăрăшса ĕҫленине епĕр нихăҫан та манас ҫук. Партипе правительства руководителĕсемпе пĕрле вăл „Таймыр", „Мурман", „Йермак" пăрҫĕмĕренсем ҫинчи, сторожевой суднă „Мурманĕц" ҫинчи експедицин кашни вăхăтне тĕплĕн сăнаса пычĕ. Ҫав кунсене аса илсе, малтанхи йăвăр вăхăтрах пире хăвăрт пулăшу панăшăн Сталин йулташа тата пирĕн правительствăна ырă сунса тав тунине каласа пама сăмах та тупма пултараймастăп.

Епĕр пăра ҫурҫĕр широтин 70 градус та 54 минутинче тата хĕвеланăҫ долготин 19 градус та 49 минутинче пăрахса хăвартăмăр, 274 талăк хушшинче 2 500 километр йухрăмăр. Тăван ҫĕршыва таврăнсан, епĕр тӳрех куҫса ҫӳрекен станцин ăслăлăх материалĕсене тĕпчесе вĕренме тытăнтăмăр. П П Ширшовпа, Й. К. Кренкелпе пĕрле ҫав ĕҫе ҫĕршыври ăслăлăх учрежденисем те нумай тăваҫҫĕ. Астрономилĕ, магнитлă тата метеорологилĕ сăнавсене тĕпчесе вĕренеҫҫĕ. Пăр куҫни ҫинчен пысăк тата тĕрĕс картă туса хатĕрлеҫҫĕ. Вăта ҫĕрти поҫар бассейнинчи шыв тĕпĕнчен илнĕ пробăсене тĕпчесе вĕренеҫҫĕ. Планкротпа тунă пробăсене те тĕпчесе вĕренеҫҫĕ. Ăслăлăх материалĕсене йăлтах тĕпчесе вĕренессине епĕр ҫак ҫул хушшинче туса пĕтерме шутлатпăр.

Пирĕн експедици, ҫынсен пухăшĕпе, сахал мар ĕҫсем туса. Анчах ку вăл пурне те тунă тенине пĕлтермест.

Пирĕн никам тĕкĕнме пултарайман советăн ҫĕрĕнче, етемлĕхĕн генийĕ—аслă Сталин пурăннă тата ĕҫлене ҫĕршывра, большевикла хăйула ĕҫсемшĕн вĕҫĕ-хĕрри ҫук, хамăр тăван ҫĕршыври патриотсемшĕн хăйулăхпа паттăрлăхăн вĕҫĕ-хĕрри ҫук.

Майăн 21-мĕшĕнче куҫса ҫӳрекен „Ҫурҫĕр поҫусĕ" станцине усăнрăнпа тата пăр ҫинче тăватă мухтавлă поҫарниксем—Совет Сойузĕн Геройĕсем И. Д. Папанин, П. П. Ширшов, Е. Т. Кренкел тата Е. К. Федăрăв хĕл касма пуҫлани ҫулталăк тултарат.
УКЕРЧЕК ҪИНЧЕ: Папанинцăсем, хĕле кĕтсе илме хатĕрленĕ май, хăйсен палаткине хӳтĕлеҫҫĕ.
(Сойузфото).

Трактăрсемпе ĕҫлес плана тултарас пулат

Республикăри чылай машинăтрактăрлă станцисем ҫуракинче трактăрсемпе ĕҫлес плана тултараймарĕҫ. Куславкари тата Шăмăршăри МТС-сем кăна хăйсен планĕсене тултарчĕҫ. Вăрнар МТС-ĕнче те ҫуракинче трактăрсемпе ĕҫлес плана 92 процент тултарнă. Пăрачкаври МТС-ин план тăрăх, ҫуракинче трактăрсемпе 10.400 гектар ĕҫлемеле пулнă, 8113 гектар ĕҫленĕ.

Елĕк, Трак машинă-трактăрлă станцисем ҫуракинче пит йапăх ĕҫлерĕҫ. Плансене ҫурри йахăн ҫеҫ тултарнă. Елĕкри МТС-че трактăриссене ĕҫлеме лайăх услови туса паман. Пĕр бригадăра та будкă пулман. Куҫтмассăлă ĕҫсене туса пыни пулман. Трактăриссем хушшинче ăмăртса ĕҫлессине пуҫарса йаман. Уйрăм трактăриссем хăйсен нормине ытлашшипех тултарса пынă пулсан та, вĕсен ĕҫĕсене хакламан, малашне те ҫавăн пек тултарса ĕҫлеме пулăшса пыман.

Трак МТС-че те, ҫураки пуҫланиччен трактăрсене лайăх йусаман пирки, ҫураки вăхăтĕнче простойсем тӳрĕҫ, ҫавна май плана тултараймарĕҫ. Тăвай, Ҫĕрпӳ, Тутаркас МТС-сем трактăрсемпе ĕҫлес плансене тултарман.

Халь ҫураки ĕҫĕ вĕҫленсе пырат. Ирхи ҫĕртме сухи тăвас ĕҫ пуҫланчĕ. Ҫавăнпа кашни МТС-ин трактăрсемпе ĕҫлес плана ирхи ҫĕртме сухине тунипе тултарассишĕн, ҫĕртме сухине пĕтĕмпех трактăрсемпе сухалассишĕн кĕрешмеле. Ҫакна пурнăҫлама Патăрйел, Пăрачкав МТС сем тытăннă.

Патăрйел МТС-чи кашни бригадă халĕ ирхи ҫĕртме ĕҫĕнче ĕҫлет, Пăрачкав МТС-че те ирхи ҫĕртме сухи тăваҫҫĕ.

Ҫуракинче стахановла ĕҫлекен бригадăсем, трактăриссем чылай палăрчĕҫ. Акă, Пăрачкав МТС-че Гришинă йертсе пыракан хĕрарăмсен бригади МТС-че малти ĕрете тухнă. Унăн бригади ҫуракинче пурĕ 480 гектар, кашни трактăр пуҫне 160 гектăр сухаласа плана тултарнă. Ку бригадăри Борисăвă трактăриска сменăра 6—7 гектар сухаласа, ҫунтармалине 4 килограм перекетлесе пынă.

Сарайĕв трактăрис СТЗ трактăрпа нормă тăрăх сменăра 5 гектар сухалас вырăнне, йалан 7 гектар сухаласа, ҫунтармалине 3—4 килограм перекетленĕ.

Ҫураки вăхăтĕнче куҫтмассăлă ĕҫе бригадăсенче лайăх туса пынă. Ку тĕлĕшпе Маркин бригадир йертсе пыракан 15-мĕш бригадăна палăртса хăварни кирлĕ. Маркин бригадир трактăриссене хăйех РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене вĕрентнĕ, хаҫат-журналсем вуласа панă.

Канаш МТС-чи Павлăв йертсе пыракан бригадă та ака ĕҫĕнче лайăх ĕҫлерĕ. Трактăрсемпе планпа 400 гектăр сухаламала пулнă пулсан, 500 гектар ытларах сухаланă. Ҫак бригадă майăн 18-мĕшĕнче 90 гектар ирхи ҫĕртме сухи тунă.

Калинин.

Муҫчировани тунă

Ишекри (Ишлей р.) Сталин йачĕпе тăракан колхоз членĕсем ака ĕҫне пĕтернĕ хыҫҫăнах, ҫуртри акнă лаптăксене муҫчировани тума тытăнчĕҫ. 10 гектар тулă, 18 гектăр сĕлĕ, 12 гектар урпа акнă лаптăксене 1,5—2 сантиметр хулăмĕш улăм сарса муҫчировани тунă.

Колхозри кашни бригадăрах пахча-ҫимĕҫсене лартма тытăннă. Майăн 18-мĕшне пур бригадăрах та ҫĕрулми лартса пĕтернĕ.

Халь бригадăсем ирхи ҫĕртме сухине сухалама тытăнчĕҫ.

А. Наумăв.

Вăрлăхлăх участкисем

Шăхасан районĕнчи „Ирĕклĕх" колхоз ҫуракине майăн 9-мĕшĕнче вĕҫлерĕ. Колхоз вăрлăх участки ене паха вăрлăхсемпе акса хăварчĕ. Вăрлăхлăх 2 гектар тулă, 4 гектар сĕлĕ, 2 гектар пăрҫа, 1 гектар йасмăк акнă. Вăрлăхсене йаровизацилесе акса хăварнă.

Вăрлăхлăх акнă тырăсене пăхса ҫитĕнтерме тата вĕсене уйрăмăн пуҫтарса кĕрес тĕлĕшпе уйрăм звеносем ҫирĕплетнĕ. Ҫав звеносем вăрлăхлăх акнă участкăсенче ĕҫлеме тытăнчĕҫ.

Колхоз ҫуртрисене муҫчировани тума тытăннă. Ку вăхăтчен 14 гектар ҫинче улăм сарса тухнă.

А. Оҫипăв.

Учитĕл ĕҫĕнче 30 ҫул

ШАМĂРША (хамăр корр.). Анат-Чаткас туллимар вăтам шкулĕнчи учитĕл Патăв Никифăр Васильĕвич педагог ĕҫĕнче ĕҫлеме пуҫланăранпа кăҫалхи ийунĕн 6-мĕшĕнче 30 ҫул тултарат.

Патăв йулташ вăтăр ҫул хушшинче темиҫе ҫĕр ҫамрăка вĕрентсе кăларнă. Вăл ку ĕҫре Октябĕр революҫци пулнă хыҫҫăн тин пысăк чыс, чăн-чăн хисеплĕх илчĕ. Патăв йулташ вĕрентсе кăларнă ҫамрăксем халь инженерсем, ăслăлăх ҫыннисем, ҫотчиксем, учитĕлсем т. ыт. пулса ĕҫлеҫҫĕ. Акă, сăсахрац, Патăв йулташ ученикĕ пулнă Уткин йулташ инженера вĕренсе тухнă. Халь вăл Кузбассра. Зайкин йулташ Хусанти Университетра ăслăлăх работникĕ пулса ĕҫлет, Кудрйашов йулташ—ҫотчик.

Никифăр Васильĕвич вăтă пулсан та, шкулта тата общĕствăлă ĕҫре пĕтĕм вăйне хурса, тăрăшса ĕҫлет. Вăл йертсе пыракан класра ачасем вĕренӳре 100 процентĕнех ĕлкĕрсе пыраҫҫĕ, шкула 98 процент ҫӳреҫҫĕ.

Патăв йулташ 1929 ҫулта йалта колхоз организацилес тĕлĕшпе хĕрӳлĕн ĕҫлет. Вăл „Трактăр" колхоза организацилекенсенчен пĕри пулат. Унтанпах колхоз ĕҫĕнче тата йалсовет членĕ пулса активлă ĕҫлет. ССРС Верховнăй Совет суйлавĕнче хĕрӳлĕн хутшăнса ĕҫленĕ. Хальхи вăхăтра та, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлама хатĕрленес ĕҫрте активлă ĕҫлет. Йалти ĕҫсыннисем хăйсен учитĕлне йуратаҫҫĕ. Унăн халăх умĕнчи авторитечĕ пысăк.

Анат-Чаткас йалйыншĕсем вăтă учитĕл Никифăр Васильĕвичăн 30 ҫул хушшинчи мухтавлă ĕҫĕсене ысланма хатĕрленеҫҫĕ.

М. Митрофанăв.

Джамбул сăвви-йуррисен сборникĕ чăвашла тухат

Чăвашсен Государства Издательстви Казахстан халăх йураҫиимпровизаторĕ орденоносец Джамбулăн сăвви-йуррисен сборникне ҫак кунсенче пичетлесе кăларат. Сборнике кĕнĕ сăва-йурăсене чăваш писатĕлĕсемпе поечĕсем: Уйап Мишши, Илле Тукташ, Нестĕр Йанкас, Митта Петĕрĕ, йулташсем куҫарнă.

Джамбул йубилейне ытти нацилĕ республикăсенчен представителсем пыраҫҫĕ. Чăваш Совет Писатĕлĕсенчен йубилейре пулма Нестĕр Йанкас Касахстана, Алма-Ата хулине, тухса кайрĕ.

С у д

Общĕствăлă пурлăха салатакансем

Автан ҫырминчи (Йетĕрне р.) Й. П. Петров октаберĕн 9-мĕшĕнчĕн пуҫласа апрелĕн 9-мĕшчен Палтай йалповĕнче пекăр пулса ĕҫленĕ. Ҫак хушăра вăл 907,7 килограм хура ҫăкăр, 428,8 килограм шурă ҫăкăр, 85 процентлă ҫăнăх 80 килограм тата 21 михĕ, мĕн пурĕ 2,157 тенкĕлĕх салатса пĕтернĕ. Йетĕрнери халăх сучĕ ҫак ĕҫе пăхса тухса, Петрова 3 ҫул хушши тĕрмере хупса усрама тата 2157 тенкĕ шыраса илмеле турĕ.

Н. Цветкăв.
М. Йемельанăв.

Канаш—Шупашкар чукунҫул строительстви

Майăн 20-мĕшĕнче пĕр сухрăм та виҫĕ ҫĕр метр реҫсă хунă. Шупашкара ҫитесси 18,7 сухрăм йулнă.

Чукунҫул строительствин управленийĕ ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ рабочисен шутне 3200 ҫынна ҫитересси ҫинчен йышăннă постановленине пурнăҫлаиман. Халĕ мĕн пурĕ те 1179 ҫын ҫеҫ ĕҫлеҫҫĕ.

К Ĕ С К Е Н

** „Ленин в Октябре" йалта. Майăн 9-мĕшĕнче Йĕкĕт Нăрвашри (Тăвай р. „Ленин в Октябре" йатлă кинофиҫм кăтартрĕҫ. Фиҫма курма халăх питĕ нумай пухăннă.

С. Йефимăв.

** „Петр I." Куҫса ҫӳрекен кино Трак районĕнчи колхозсенче „Петр I" фиҫмăн пĕрремĕш серине кăтартса ҫӳрерĕ. Майăн 10-мĕшĕнче Албахтинă йалсоветĕнчи „Сила" тата „Партизан" колхозсенче ку фиҫма курма 1750 ҫын пынă.

И. Йегорăв.

АСЛĂ ХУРАКАССИНЧИ (Сентĕрвăрри р.) „Социалисăм" колхозри сĕт-ҫу ферми 1938 ҫулшăн государствăна аш-какай пĕтĕмпех парса татрĕ. Ҫавăн пекех Уйпӳлемĕчри, Тури карапашри Мичурин йачĕпе тăракан колхозсенчи фермăсем те аш-какай парса татрĕҫ.

Халь чылай колхозсем государствăна аш-какай сутма тытăнчĕҫ. Кĕчкейри „Дружба" колхоз государствăна 204 килограм аш-какай сутрĕ.

П. Ваҫильĕв.

** 251 тĕп йăваҫ лартнă. Вĭрманкибекри (Шăхасан р.) Туллимар вăтам шкулта вĕренекенсемпе пионерсем кăҫал тĕрлĕ йăваҫсем 251 тĕп лартнă. Вĕсем йăваҫсене лайăх пăхса шăварса ҫитĕнтереҫҫĕ.

М. Тимофейĕв.

** Автомашинă илчĕ. Тивĕшри (Ишлей р.) йалпо таварсем сутмали пĕрремĕш квартал планне 100,5 процент тултарчĕ. Халь йалпо таварсем кӳрсе килме автомашинă туйанчĕ.

М. Сорокин.

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕҫлекен Шупашкар Хулин XIII мĕш участкăри суйлав комиҫҫийĕ пĕлтерни

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕҫлекен Шупашкар Хулин XIII-мĕш участкăри суйлав комиҫҫин адрĕсĕ ҫапла: Чебоксары, Кооперативный техникум, ком. № 17, телефон № 4—65.

Ответлă редактăр заместителĕ
И. П. ПАВЛАВ—ПИНЕР.

ПАПАНИНĔЦСЕН ЛАГĔРĔ МУСКАВРА

Мускаври Политехнически музейра „Папанинĕцсен лагĕрĕ" йатлă интереслă выставка уҫăлнă. Унта поҫарти „Ҫурҫĕр поҫусĕ" станцин оборудăванийĕсене (1500 експоната йахăн) тăратнă.

Зала варринчи йăваҫран тата гипсран тунă „пăр ҫинче" папанинĕцсем пурăннă палаткăна вырнаҫтарнă. Унпа йунашар — бамбук йăваҫĕнчен тунă икĕ мачтă. Вĕсем ҫинче хĕрлĕ пусмасем — Совет Сойузĕн государствă флагĕ тата йалавĕ. Йалавĕ ҫинче Сталин портречĕ. „Йур" ăшне йĕлтĕрсем, кĕреҫе, дом чиксе лартнă. Унтах витре выртат. Палаткăн тепĕр йенче — нартăсем. Вĕсенче — ҫимели продуктăсем тултарнă икĕ бидон. Акумуҫатăрсене зарйад тума усăкурнă велоҫипед привочĕ тăрат. Нумайах мар айакра поҫарти електростанци — чаплă ҫиларманĕ. Палаткăна кĕмели вырăнпа йунашар пекех метеорологи будкине вырнаҫтарнă, унта сăнаса пынисене ҫырнă журнал пур. Палаткă тамбурĕ ҫинче ҫăмлă пиртен ҫĕленĕ атăсем „тинсе тăраҫҫĕ".

Пуртĕ ҫав тери лайăх та чăн пурнăҫри пек. Ху выставкăра тăнине те ирĕксĕрех манса кайатăн. Таҫта палата ҫывăхĕнче, метеорологи будки ҫывăхĕнче Папанин, Федăрăв, Ширшов пулмала пек. Кренкел радиоаппарат умĕнче пĕкшĕнсе черетлĕ радиограммă: „Пурте йĕркелĕ. Кăнтăр-Хĕвеланăҫĕнче куҫса пыратпăр. Широта..." тесе пăрат пек.

Кунтах, залăра, Папанин палаткин сурмала кăтартнă моделĕ (кӳлепийĕ) пур. Палаткăн шалти йĕрки: тăвата койкă, Кренкелĕн радиоапарачĕпе пĕчĕк сĕтелĕ, будиҫник, тĕрлĕрен хатĕрсем, Кренкелĕн чĕлĕмĕ.

Стенасем тăрăх кĕпе-тумтирсен, апат-ҫимĕҫсен, кухҫари чашăк-тирĕксен, ăслăлăх ĕҫĕсене тумали хатĕрсен, вунă кун пурăнмалăх апат-ҫимĕҫ хунă авари нартисен витринисене вырнаҫтарса тухнă. Акă вĕсем ҫимĕҫсен чаплă концетрачĕсем: борщч, купăста йашки, таблеткăпа тунă пăрҫа йашки — иккĕмĕш чашăкна паракан ҫимĕҫсем — чăх тата какай котлечĕсем, шпик, пылаклă ҫимĕҫсем. Папанинĕцсем уйрăмăнах вĕсене ваҫҫи йатарласа хатĕрленĕ сухарийĕ, унта 35 процент какай, конфетсене тата „С" витаминлă чăката йуратнă. Йулашар — кухҫа. Кунта 75 йапала — чейниксем пур. Вĕсемпе хĕлкаҫакансем ҫулла шыв вĕретнĕ тата хĕлле йур ирĕлтернĕ, тĕрлĕ виҫелĕ кастрӳлсем, Папанин пăр ҫинче конструкцилесе тунă лампă, пластмассăран тунă мискăсем пур.

Икĕ витринăна поҫарта тăхăнмали тумтирсемпе кĕпе-йĕмсем йышăннă. Кунта папанинцăсене ваҫҫи йатарласа ҫĕленĕ сукна тата брезент брӳкисене, нерпăран ҫĕленĕ брӳкисем, ҫăмлă тиртен (пăлан, пăши тирĕнчен) тӳнтерле ҫĕленĕ жилетсем, вĕсене Папанин уйрăмăнах йуратнă. Совет поҫарникĕсен урана тăхăнмали йапалисем: ҫăм чăлхасем ҫăматăсем, фетрăлă „тапăчкăсем", сăран атăсем.

„Ҫурҫĕр поҫусĕ" станцин ăслăлăх оборудованийĕ уйрăм витринăсем йышăнат. Кунта йухăм хăвăртлăхне виҫсе пĕлмели ветрушкăсем, гидрологи лебедкин моделĕ, хурҫă трос, планктонран тунă ҫеткă, батометрсем, Ширшовăн лабораторийĕ, Федăрăв ĕҫленĕ хатĕрсем: температурăна татти-сыппиҫĕр виҫсе пĕлмели термограф, хронолитрсем, координатсене пĕлмели магнитлă теодомит, пусăм вăйне пĕлмели кравитацилĕ майатник т. ыт. хатĕрсем те пур.

Витринăсенчен пĕрин ҫинче илемлĕ тата ăслăлăх литературин кĕнекисене, Ленин тата Сталин произведенисене, Кренкелĕн нимĕҫпе вырăс словарне, патефон пластинкисемпе шахмăтсене, пĕчĕк аптекăна, медицинă хатĕрĕсене хурса тухнă.

Радиона, електрооборудовани експоначĕсем — мĕн пурĕ 100 експонат — пысăк вырăн йышăнаҫҫĕ. Унтах аварилĕ радиостанци те, сĕтел ҫине лартмали електричĕствă ламписем те, радиона майлаштармали хатĕрсем, шторм вăхăтĕнче ҫĕмĕрĕлнĕ „Рекорд" репродуктăр. Радиоаппаратпа йунашăр аппарат журналĕ выртат. Ăна уҫса хунă. Февралĕн 1-мĕшĕнче, штормпа пăра ҫĕмĕрнĕ вăхăтра пама ҫырнă радиограммă курăнат.

Пĕчĕк витринă ҫинче папанинĕцсен хĕҫпăшалĕсем тата вĕсем ухутара тытнă шурă упасем пур. Папанин куҫса ҫӳрекен пăр ҫинче тытнă шурă упасен тирĕсем ҫинче — 3 винтовкă, 4 револҫвĕр, упа амин тата икĕ упа ҫурин шăм кĕлеткисем выртаҫҫĕ.

Зала кĕмели вырăнта вĕрсе карăнтармали резинă кимĕ тата байдаркă тăраҫҫĕ.

Зал ĕтенисем ҫумне паттăр поҫарниксен: Водопйанăвăн, Спиринăн, Молакăвăн т. ыт. сăнĕсем, пăр ҫинчи пурнăҫăн уйрăм епизăчĕсене кăтартакан ӳкерчĕксем, гидрологилĕ сăнавсем илнĕ вырăнсене кăтартакан картăсем, Гренланди тинĕсĕ ҫывăхĕнче тарăнлăха виҫнин резуҫтачĕсем, Поҫар бассейнне гидрологилĕ кăтартни, куҫса пынă чух тинĕс тĕпĕнче мĕн тĕл пулнисем тата ытти те.

Столицăра пурнакан халăх выставкăпа питĕ интереслĕнет. Аслă шкулсенчен, тĕрлĕ учрежденисенчен Политехнически музейе массăлă екскурсисене пыма нумай зайавкăсем пыраҫҫĕ.

(ТАСС).

П Ĕ Л Т Е Р Н И

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 ҫулхи майăн 5-мĕшĕнче 435-мĕш № постановленийĕ тăрăх выҫăх-чĕрлĕх сутăн илме организацилекен йармăркăсем Чăваш республикĕнче ҫак сруксенче тата пунктсенче пулса иртеҫҫĕ.

Патăрйелĕнче—1938 ҫулхи майăн 18, 19, тата 20-мĕш кунĕсенче.
Выл-пасарĕнче (Елĕк районĕ)—майăн 19, 20 тата 21-мĕш кунĕсенче.
Нурăсра (Вăрнар районĕ) — майăн 24, 25 тата 26-мĕш кунĕсенче.
Шупашкарта—майăн 27, 28, 29 тата 30-мĕш кунĕсенче.
Ҫĕрпӳре —1938 ҫулхи ийунĕн 2, 3 тата 4-мĕш кунĕсенче.
Кавалта — ийунĕн 7, 8 тата 9-мĕш кунĕсенче.
Йелчĕкре — ийунĕн 9, 10 тата 11-мĕш кунĕсенче.
Улатăрта — ийунĕн 1,2 тата 3-мĕш кунĕсенче.
Пăрачкавра — ийунĕн 4-мĕш тата 5-мĕш кунĕсенче.
Хĕрлĕ Чутайра — ийунĕн 7, 8 тата 9-мĕш кунĕсенче.
Канашра — ийунĕн 12, 13 тата 14-мĕш кунĕсенче.

Выҫăх-чĕрлĕх сутакан колхозсене, колхозниксене тата ĕҫсынни йединоличниксене ваҫҫи суту-илӳ организацилеме йармăркăсене ҫакăн пек таварсем кӳрсе килеҫҫĕ: мануфактурă, трикотаж, ҫĕленĕ платйĕсем, ҫипсем, пуҫ тутрисем, сăран ата-пушмак, резинă калушсем, т та ыт те.

Выҫăх-чĕрлĕх йе кайăк-кĕшĕк сутакан кашни тенкĕ пуҫне 50 процентлăх тавар илме пултарат.

Выҫăх-чĕрлĕх сутма догăвăр тунă колхозсем, догăвăр шучĕпе сутмали выҫăх-чĕрлĕхе йармăрка илсе тухса сутма пултараҫҫĕ.

Выҫăх-чĕрлĕхе государствă ваҫҫи сутăн илессине йармăркăсенче Потребкооперацине Выҫăх хатĕрлекен кантурсем организацилеҫҫĕ, вĕсемех выҫăхсене йышăнмали пунктсем организацилеҫҫĕ.

Йармăркăсенче тĕрлĕрен таварсене сутассине те анлăн организацилеҫҫĕ: бакалейă таварĕсем, гастрономи, кондитер ҫимĕҫĕсем, кӳлмели тавраш сем, галантерейă, парфӳмери тата вырăнсенче тунă таварсем пулаҫҫĕ. Столовăйсем, ресторансем, чайнисем пулаҫҫĕ.

Чăваш АССР Суту илӳ Халăх Комиссариачĕ.
Чăвашпотребсойуз.

3—3.

Чăваш республикĕнчи
армансен трестне
Аслă економист-плановик
кирлĕ
Ĕҫукçи килĕшӳ тăрăх
Адрĕс: Шупашкар, Урицкайа урамĕ 13. „Меҫтрест", управҫайушчи патне
3—1

ШУПАШКАРТИ
„ХУДОЖНИК" ЕРТЕЛĔ
членĕсем кăҫалхи апрелĕн 3-мĕшĕнче йышăннă тăрăх „Кооператор" ертелĕ пĕрлешет.
Малала—
Шупашкарти „Кооператор" ертелĕ
йатлă пулат. Адрĕс: г. Чебоксары, ул. Ленина, д. № 6. тел. № 6—27.
2—2

Уполномоченный Чувашглавлита № 253.
Гор. Чебоксары, типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 408.